Чебоксарская
Ц. Б. им. Герцего
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 1 ЙУНКУН 274 (4786)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. *19-мĕш çул тухать.*

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Тăшмансем С. М. Кирова тискеррĕн вĕлерни 3 çул тултарчĕ

Йутçĕршыв разведкисен троцкисла-бухаринла агенчĕсемпе тăван çĕршыва сутакансене пĕр çын йулми тытса пĕтерер!

С. М. КИРОВ

(1934 ÇУЛХИ ДЕКАБĔРĔН 1-МĔШĔ—1937 ÇУЛХИ ДЕКАБĔРĔН 1-МĔШĔ).

1934 çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çĕршыва хуйхăлă хыпар шартах сиктерчĕ. Большевиксен партийĕпе совет халăхĕ хăйĕн йуратнă çулпуçĕсенчен пĕрине, революцин çулăмлă трибунне, аслă Сталинăн чи çывăх соратникне, ученикне тата тусне — Сергей Миронович Кирова çухатрĕç.

Фашисла буржуазин йунлă йыттисем тата шпионĕсем—Троцки, Зиновйев, Каменев хушнипе—вĕсен пулăшакансĕсем, ирсĕрскерсем, Киров йулташа вĕлерчĕç.

Сергей Миронович Киров 1886 çулхи мартăн 27(15)-мĕшĕнче Виатка кĕпĕрнинчи Уржум хулинче çуралнă. Уржум хули вăл патша вăхăтĕнче ссылка вырăнĕ пулнă.

Сережа Костриковăн семйи пит чухăн пурăннă. Сережа пĕчĕк ача чухнех ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса йулнă, ăна ача-пăча приютне вырнаçтарнă. 15 çулхи çамрăк —Костриков Хусанти технически училищăна вĕренме кĕнĕ. Кунта Сергей Мироновичăн политикăлă мировоззренийĕ йулăнса пыма пуçлат. Уржума каникула пырса çÿресе, вăл ссылнăйсемпе çывăхарат, вăрттăн тухса тăнă революцилле литературăпа паллашат.

1904 çулта, Хусанти технически училищĕрен вĕренсе тухсан, Сергей Миронович Томска кайат, унта социал-демократсен ретне кĕрет. Вăл, çамрăк çынсем васлă вăй-хăвачĕпе, рабочисем хушшинче агитаци тăват, Ленин вĕрентĕвне пропагандăлат.

1905 çулта Киров—Томскри пролетарисен революцилле кĕрешĕвĕн центрĕнче. Вăл РСДРП Томск комитечĕн составне тăрать. Вăл вăрттăн типографин заведущийĕ пулса ĕçлет, рабочисен круж... йертсе пырат.

Сергей Мироновича тĕмиçе хут тытса... 1906 çулта крепаçе хупса лартса тăваççĕ.

1908 çулхине çула, тĕрмерен тухсан, Сергей Миронович Иркутска куçат, унта арката тăкнă организацийĕ çĕнĕрен тĕркелет. Унтан, патша жандармисем йĕсĕрленĕ пирки, вăл Çурçĕр Кавказа, Владикавказ хулине (халĕ Орджоникидзе хула) тарат.

Официаллă илсен, Сергей Миронович— „Терек" йатлă либераллă хаçаран сотрудникĕ. Çав хаçатра унăн „С. Киров" тесе ала пуснă статйисем пичетленсе тухнă. Çак литературăлă псевдоним Сергей Мироновичăн çĕнĕ хушамачĕ, миллионшар çынсем пĕлекен хушамачĕ пулса тăнă.

Вăл помещчикла-капиталисăмла пусмăра тата мăшкăла хирĕç тухса каланисем черносотенцăсен кĕтÿне арката йатă. Ку хутра ăнсăртран кăна Киров тĕрмерен хăтăлса йулат.

Империалисăмлă вăрçă пуçланса кайнă. Сергей Миронович ленинла çулйĕршĕн — империалисăмла вăрçăран граждăн вăрçи тусне йарассишĕн çирĕппĕн тăрат.

1917 çулта Кавказра окăбĕр çулăмĕ йалкăшса кайсан, Киров йулташ—совет влаçне организацилекенсенчен тата шуркăзаксен бандисене хирĕç хĕçпăшаллă кĕрешÿве йертсе пыракансенчен пĕри.

1918 çулта парти Киров йулташа контрреволюципе кĕрешмели ответлă участкăра йертсе пыма—Астрахане обонă тума хушат.

Предатель Троцки Астрахане евакуацилеме приказ панă. Киров Ленин патне çав приказ пирки протест йарат, вара Ленинран кăтарту илет: „Астрахане вĕçне çитиччен сыхламала".

XI-мĕш арми Киров планĕ тăрăх наступленийе куçат. Деникина хирĕç операцисем Сталин йулташ хăй йертсе пынипе сарăлса пыраççĕ. Деникина çĕмĕрсе тăкнă. Астрахань Советсен аллинчех йулнă.

Çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пырса, Хĕрлĕ çарсем Царицына, Ставропеле, Владикавказа илеççĕ, а 1920 çулхи майăн 5-мĕшĕнче çулăмлă трибун Сергей Киров Бакури рабочисем умĕнче сăмах тухса калат.

...1921 çулхи февраль. Сергей Миронович хĕллехи йăвăр условисенче Çурçĕр ...тири партизансен утлă çар бригади Кавказ сăрчĕ урлă каçассине организацилет. Кавказ сăрчĕ урлă йумăхри пек ...ттăрăн каçса, партизансем Грузири меншевиксен пусмăрне хирĕç восстани тунă рабочисемпе хресченсене пулăшу пама вăхăтра çитнĕ.

Çав çулсенех Киров йулташа Азербайджанри Коммунисла партин Тĕп Комитет секретарне суйлаççĕ. Вăл Серго Орджоникидзепе пĕрле великодержавлă шовинисăмла хирĕç тата вырăнти националисăма хирĕç çине тăрса кĕрешет, Закавказйери чи пысăк парторганизацийе Ленин—Сталин кăтартса панă çулйĕр çинĕ сĕнчи пĕтĕçтерсе пырат. Киров йулташ Азербайджанăн промышленнăçне ура çине тăрата тата реконструкцилеме нумай вăй-хăват хунă.

1923—1924 çулсем. Киров большевикла хайарлăхпа троцкиссене çĕнтерсе аркатат. Баккури парти организацийĕ ленинла позицире çирĕппĕн тăрат.

Киров йачĕ, пĕр тăркаланмасăр, пĕр шĕллемесĕр кĕрешекен большевикăн, Ленинпа Сталинăн тĕрĕс вĕренекенĕн йачĕ, пĕтĕм партишĕн тата пĕтĕм рабочи класшăн паллă.

Партин X-мĕш сйесĕнче С. М. Кирова парти Тĕп Комитечĕн членĕсен кандидатне, XI-мĕш сйесра — Тĕп Комитет членне суйланă.

1926 çулта зиновйевла ылханлă бандă большевиксен партине хирĕç тухсан, хăйĕн предательле ĕçĕсене Ленинград организацин ретĕсенче сарса йама хăтлансан, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Киров йулташа Ленинград большевикĕсене кĕрешÿре — революцин тăшманĕсене хирĕç кĕрешÿре йертсе пыма йарат. Киров йулташ партири тата партире тăман большевиксен кадрĕсене пĕтĕçтерет, Зиновйевăн тата уппа пĕрлисен теорийĕсем контрреволюцилĕскерсем иккенне массăсене ăнлăн ăнлантарса парат.

Ленин хулинчи Мироныч воспитани панă большевиксем — капиталисăм реставратăрĕсен бухаринла-рыковла контрреволюцилле шайкине ним хĕрхенÿсĕр тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкаççĕ.

Киров йертсе пынипе Ленинград Совет Союзĕн социалисăмла индустрийĕн хăватлă базы пулса тăчĕ.

С. М. Кирова, партин паллă çулпуçĕсенчен пĕрине, 1930 çулта ПСК(б)П Сталинла Тĕп Комитечĕн Политбÿро членне суйлаççĕ.

Халăхпа йаланах тачă çыхăнса тăрса, Киров массăсене халăхăн тăшманĕсене хирĕç большевикла кĕрешме вĕрентсе пынă. Троцкиссем, зиновйевецсем, бухаринецсем пурте, фашисăмăн сутăнчăклă агенчĕсем пурте Кирова курайман, мĕншĕн тесен вăл чи мухтавлă, чи çирĕп сталинецсенчен пĕри, халăхăн чи паллă çулпуçĕсенчен пĕри пулнă.

Фашиссене тара кĕрĕшнĕ ирсĕрсем Киров йулташа предательле персе, партири тата партире тăман большевиксен хурçă пек çирĕп ĕречĕсене йĕркерен кăларма шухăшланă. Анчах Ленин—Сталин партийĕ, пĕтĕм совет халăхĕ, çав предательствăна хирĕç—партин Тĕп Комитечĕ тавра, халăхсен йуратнă çулпуçĕ аслă Сталин тавра тата тачăрах пĕтĕçипе ответлерĕç. Революцилле сыхăлăха тата ытларах ÿстернипе ответлерĕç.

С. М. Кирова тăшмансем тискерле вĕлернинчен Ленинградри ĕçсыннисем хăйсене валли кирлĕ выводсене турĕç. Шанчăклă сталинец А. А. Жданов йертсе пынипе Ленин хулинчи партири тата партире тăман большевиксем хăйсен революцилле сыхăлăхне куллен кун ÿстерсе пыраççĕ, Ленинграда социалисăмăн никам пырса тĕкĕнейми крепăçĕ тăвас задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ.

Фашиссен усал планĕсемпе шухăшĕсене—вĕсем совет государствин хăватне хавшатма, помещчиксем, капиталиссем тата кулаксем пуç-пулса тăрассине таварма ĕмĕтленнине—тăрă шыв çине кăларнă.

ПСК(б)П Сталинла Тĕп Комитечĕн посланецĕ Н. И. Йежов йулташ йертсе пынипе, мухтавлă наркомвнуделецсем, пĕтĕм совет халăхĕ пулăшнипе, халăхăн чи хайар тăшманĕсене, виçĕ хут ылханлă предательсемпе провокаторсене пур шăтăксенчен те хуса кăларчĕç, вĕсне çитиччен хуса кăларса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем, фашисăмăн троцкисла-зиновйевла-бухаринла лазутчикĕсене, çав çĕлен-калтасене, совет çĕрĕ çинчен шăлса ыватаççĕ, вĕсене пĕтерсе хураççĕ.

Совет халăхĕ Сталинла Конституцин аслă йалавĕпе пурăнат, çĕнтерÿсем туса пырат. ССР Сойузĕнчи халăхсем декабĕрĕн 12-мĕшне—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлавне етемлĕх историйĕнче халиччен пулман политикăлă активлăхпа хатĕрленеççĕ. Совет халăхĕн мораллĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕн чаплă аслăлăхне, вăл Ленин — Сталин партишĕн, халăхсен аслă çулпуçĕшĕн—Сталин йулташшăн пĕтĕм чĕререн тăнине пĕтĕм тĕнче курат.

Çирĕп сталинец, пролетариатăн нимрен хăрами революционерĕ Сергей Миронович Киров ĕçсыннисен чĕрисенче, вĕсен асăнăвĕнче пурăнат.

Киров йулташ Ленин—Сталин ĕçĕшĕн хăйĕн пурнăçне пачĕ. Ленин — Сталин ĕçĕ çĕнтерсе пырат, пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерет.

(ТАСС).

Совет халăхĕ Сергей Миронович Кировăн çутă йатне чысра тытат

Совет халăхĕ большевикла партин паллă деятелĕн, çулăмлă, нимĕнрен хăраман революционерăн, Ленинград большевикĕсемпе ĕçсыннисен йуратнă руководителĕн тата тусĕн—Сергей Миронович Киров йулташăн çутă йатне чысра тытат.

Саранск хулинчи 72 çулхи йумах ăсти Йе. П. Кривошейева халах Кирова йуратни çинчен çапла калса панă:

...Ох, Сергей Миронович, пирĕн
чаплă сокол!
Тĕпелти тенкел çине, тăсалса
ÿкессĕн еп,
Куçăмсем те манăн хупанса
ларсассăн,
Алсене манне кăкăр çине
хурсассăн,—
Ун чух тин Мироныча еп манăп,
Сывлăшсăрскерне чĕререн тин
уйăрăп.

Мĕн тăвас ман? Хуйхăма мĕнле
йĕрсе сирес ман?
Пĕтĕм халăх тусĕ пек куç умне
тухатăн ес,
Хăм йуратнă ывăл пек асăмра
тăратăн,
Çутă ăстăнпа ес, Мироныч, чапа
тухрăн,
Лайăх ĕçсемпе ес аслă пулса
тăтăн.

Çĕршывăн нумай хулисенче тата йалĕсенче Сергей Миронович Киров йачĕпе памйатниксем лартнă тата мемориаллă хăмасем тунă. Томск хулинчи Ĕç Дворецĕн çурчĕ çинчи мемориаллă хăма çине çапла çырнă: „1905 çулхи йанварĕн 18-мĕшĕнче кунта рабочисен демонстрацийе полици хушшинче йун йулса çапăçу пулса иртнĕ. Демонстрацийе Российари Социал Демократла Рабочисен (большевиксен) Партин вăрттăн ĕçлекен комитечĕ 1905 çулхи йанварĕн 9-мĕшĕнче патша Петербург рабочисене персе парахнине хирĕçле протес организациленĕ. Киров, Сергей Миронович (Костриков) çав демонстрацин организаторе пулнă".

Çавăн пекех, Томск большевикĕсен Киров хутшăннипе пухусем пулса пынă, 1905 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче ăна арĕсленĕ çуртра та мемориаллă хăма тунă.

Вунăшар заводсене, фабриксене, колхозсене, шкулсене, ача çурчĕсене, садсене Сергей Миронович Киров йатне панă.

Кинофильмăсенче, йурăсенче, картинăсенче çулăмлă большевикла трибунăн йуратна сăн-сăпачĕ ĕмĕрлĕхех çырăнса йулнă.

Ленинградри орденлă „Ленфильм" студийе „Друзья" йатлă кинофильм ÿкерсе пĕтерет.

Ку фильм—Сергей Миронович Киров 1918 çулта Çурçĕр Кавказра Совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешни çинчен каласа паракан хумханулă калав. Республикăн халăх артисĕ Бабочкин выляакан пултарулă çирĕп большевик Алексей сăнĕнче кино куракансем Сергей Мироновичăн йуратна сăн-сăпатне курĕç.

С. М. Кировăн тепĕр тапхăрти хĕрÿлĕ ĕçĕ çинчен „Астрахань" йатла çĕнĕ фильм каласа парĕ. Кунта Кирова Михайлов большевикăн сăн-сăпатĕнче кăтартнă. Фильма çитес çывăх вăхăтрах ÿкерсе пĕтереççĕ.

Ленинград парти организацин пурнăçне, троцкисла-зиновйевла предателсен ирсĕр бандине хирĕç С. М. Киров йертсе пынипе çулăмланса пынă хайар кĕрешÿве—„Великий гражданин" фильм çинче кăтартнă. Екран çине вăл ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче тухат.

(ТАСС).

Киров музейĕ

1938 çул пуçламĕшĕнче Ленинградра, Кшесинский особнякĕ пулнă историлĕ çуртра, Сергей Миронович Киров музейĕ уçăлат. Ку çуртра 1917-мĕш çулта большевиксен партин Тĕп Комитечĕ вырнаçнă.

С. М. Кировăн революцилле чаплă пурнăçне сăнласа паракан нумай фото-ÿкерчĕксене, историлĕ документсене, картинăсене тата скульптурăсене икĕ хутлă особнякăн 16 залне вырнаçтараççĕ.

Пĕрремĕш хутра çак уйрăмсем вырнаçаççĕ: „С. Костриковăн Уржумри тата Хусанти ача чухнехи пурнăçĕпе вĕренÿ çулĕсем", „Томскри тапхăр—С. М. Кировăн революцилле ĕçĕн пуçламĕшĕ", „Киров Владивостокра", „Граждăн вăрçин фрончĕсенче—Астрахань шĕн кĕрешни", „Кавказ Лешйенче Совет влаçĕшĕн кĕрешни", „Киров—Азербайджанри большевиксен руководителĕ".

С. М. Киров Ленинград большевикĕсен руководителĕ пулса ĕçленине, вăл халăх тăшманĕсемпе кĕрешнине, унăн Çурçĕре çĕнсе илес ĕçри организаторла тата йертсе пыракан рольне, индустриализацишĕн тата Хĕрлĕ Çарăн оборона вăйхăватне çирĕплетессишĕн кĕрешнине, çĕнĕ кадрсемшĕн тăрăшнине музейĕн иккĕмĕш хутри залăсем çутатса параççĕ.

Траурлă залăра музейа курма пыракансем Рудковски художвикăн „Сталин Киров тупăке умĕнче" пысăк ÿкерчĕкĕ, Сергей Мироновича тăшмансем вĕлернĕ хыççăн ÿкерсе илнĕ гипслă маскăна, Кировăн парти билетне, орденне тата ыттисене те кураççĕ.

(ТАСС).

Ленинградра С. М. Киров памйатникне лартаççĕ

Томский скульптор С. М. Киров памйатникĕн пройектне туса пĕтернĕ, вăл памйатнике Ленинградра Кировски площчĕде лартаççĕ. Сергей Миронович памйатникне сылтăм аллине çĕклесе малала кармашса тăракан тунă.

Сергей Мироновичăн кĕлетки — 8 метр çÿлĕш. Пĕтĕм памйатникĕн çÿлешĕ—15,5 метр.

Памйатник лартас тĕлĕшпе Кировскри площчĕдре хатĕрленÿле ĕçсем тума пуçланă. Сергей Миронович кĕлеткине тата барельефсене бронзăран шăратса тăваççĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленни

Ленинградри Красногвардейски суйлав округĕнче 74-мĕш суйлав участкин доверенайĕ Каçйанов йулташ хăйĕн декабĕрĕн 12 мĕшĕччен ĕçлемели планне тунă. Вăл панă задани тăрăх, суйлавçăсен активĕ хваттерсенче кашни кунах калаçусем туса ирттерет. Каçйанов йулташ фотодневник тунă. Пухусен тата кружок занятисен фото ÿкерчĕкĕсем килхуçи хĕрарăмĕсене пысăккăн интереслентернĕ. Участкăра час-часах культурлă кану вечĕрĕсем туса ирттереççĕ.

Октăбĕрски чукунçул çинче агитаци пойăсĕ çÿрет. Ун çинче çÿрекен агитаторсемпе пропагандиссем станцисенче, участкăсенче, çул çинчи будкăсенче Сталинла Конституцине тата суйлав саккунне ăнлантараççĕ. Агитпойăсăн ултă вагонĕ çинче клуб, нумай тиражлă хаçат редакцийĕ, икĕ куçса çÿрекен кино вырнаçнă. Агитпойăс хăйĕн ĕçĕпе пилĕк пин ытла суйлавçăна усă панă та ĕнтĕ.

Ворошиловград чукунçул узелĕнчи (Украина) комсомол организаци хула çывăхĕнче çÿрекен рабочи пойăссем çинче ĕçлеме йатарласа агитколлектив организациленĕ. Агитколлективра ĕçлекенсем пассажирсемпе суйлав умĕнхи калаçусем туса ирттереççĕ.

Курск облăçĕнчи суйлав округĕсен центрĕсенче кулленех радиопа йулашки хыпарсене парассине организациленĕ. Радиопа хаçатсен обзорĕсене, доверенайсемпе агитаторсен сăмахĕсене параççĕ. Суйлав участкисенче икĕ пине йахăн репродуктăр лартнă.

(ТАСС).

Совет халăхĕн йуратнă çынĕ, революцин çулăмлă трибунĕ, аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕ, ПСК(б)П Тепкомĕн Политбÿро членĕ—Сергей Миронович Киров троцкисла-зиновйевла-бухаринла çыввĕлеренсемпе шпионсен фашисла банди алли айне пулса вилчĕ.

ÿКЕРЧĔК СИНЧЕ: Сергей Миронович Киров ПСК(б) Партин XVII-мĕш сйесĕн трибуни çинче. (М. Калашников фото-ÿкерчĕкĕ, Пĕтĕм Сойузри фотоискусствăн 1-мĕш выставкин експоначĕ).

Сойузфото репродукцийĕ.

Социалисăмла ăмăртувăн çĕнĕ çекленÿвĕ

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас кун тĕлне 1937 çулхи производствăла программăна срукченех тултарассишĕн пыракан социалисăмла ăмăрту пĕтĕм совет çĕршывĕпех сарăлат. Социалисăмла индустрин нумай чи кирлĕ отраçĕлĕсенчи рабочисем тата инженерсемпе техниксем, вăл шутрах металлургсем, угольщиксем, машиностроителсем ăмăртува хутшăннă та ĕнтĕ.

Нойабĕрĕн 23—25-мĕшĕсенче, Свердловскра, Сталин йулташ сĕннипе, Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ пухнă пăхăр промышленнăç работникĕсен пĕтĕм сойузри канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлува йăвăр промышленнăçри Свердловск облăçĕнчи ыттан, кăмрăк тата ытти отраçлĕсенчи предприйатисенчи роботниксем те хутшăннă.

Канашлу ĕçне ССР Сойузĕн Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ хутшăннă. Каганович йулташа канашлура пулнисем хĕрÿлĕн кĕтсе илнĕ.

Канашлу пĕтĕм рабочисем, инженерсем, техниксем, пăхăр промышленнăçĕнчи пур работниксем патне, вĕсен рудниксенче тата заводсенче социалисăмла ăмăртăва малала çĕклентерме чĕнсе чĕнÿ йама йышăннă. (ТАСС).

Машиностройени Халăх Комиссариатĕнче тата станоксемпе инструментсем тăвакан промышленнăç профсойузĕн Тĕп Комитетĕнче

Социалисăмла ăмăртувăн çĕнĕ çекленÿне организацилени

Машиностроени Халăх Комиссариачĕ тата станоксемпе инструментсем тăвакан промышленнăç профсойузĕн Тĕп Кометечĕ, рабочи-стахановецсен тата ударниксен сĕнÿвĕсемпе килĕшсе, çапла йышăннă: станоксемпе инструментсем тăвакан промышленнăç предприйа исенчи рабочисем хушшинче халĕ çĕнĕ вăйпа сарăлса пыракан социалисăмла ăмăртува хавхалантарма тата ăмăртува вăйлăрах сарса йама май тума Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тата йăвăр промышленнăçри профсойузсен примерĕпе ăмăртура ĕçĕн чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартнă тата стахановла йухăма çĕкленĕ малта пыракан заводсене, цехсене тата производствă участкисене пама виçĕ куçса çÿрекен хĕрлĕ йалав тăвас.

Кунсăр пуçне, предприйатисенчи цехсем тăрăх вĕсенче социалисăмла ăмăртăва хавхалантарма завод управленисемпе профсойузсен завод комитечĕсен йалавĕсене тунă.

Ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешÿре палăрнă чи лайăх стахановцăсене, ударниксене тата хуçайственниксене „Совет машиностройенин малта пыракан конструкторĕ" значокпа, „Социалисăмла производствă отличникĕн атестачĕпе" тата „Похвальнăй листпа" наградăлаççĕ.

(ТАСС).

КЕСКЕН

* Донри тата Кубаньри ĕçсыннисем хăйсен укçи тенкисене перекет кассисенче усрани йулашки тăвата çул хушшинче тăвата хут ÿснĕ. Халĕ перекет кассисене укçатенкĕ хывни 150 мĕлйун ытла тенкĕне çитнĕ. Колхозниксем хывни те тăвата хут ытларах ÿснĕ.

* Совет Сойузĕнчи нумай хуласенче конькипе чупакансем хĕллехи сезона уçнă та ĕнтĕ. Йанварĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче „ССРС кубокне" илессипе арçын тата хĕрарăм хоккей командисен календарлă тĕлпулувĕсем пуçланмала. Вăл тĕлпулусене 80 арçын, 40 хĕрарăм команди хутшăнаççĕ. Мускавра коньки спорчĕн маçтăрĕсем тренировкăлă сбор туса ирттереççĕ. Çĕршывра малти вырăна тухассипе пулакан Мускаври пĕтĕм сойузри ăмăртура Совет Сойузĕнчи конькипе чи лайăх чупакансем çĕр çынна йахăн хутшăнаççĕ.

* Ленинграда Буг йуханшыв тĕпĕнчен кăларнă кимĕ (чели) илсе пынă. Ку кимĕ историлĕ йапала. Вăл виçĕ пин çула йахăн шывра выртнă. Ку вăл—тахçан авалхи шывра ишсе çÿремели кимĕ пулнă.

(ТАСС).

СЕРГЕЙ МИРОНОВИЧ КИРОВ

А. АЗИЗЙАН



Виç çул кайарах, 1934 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче, фашисла гиенăсен ирсĕр ушкăнĕ—троцкисла-зиновйевла бандитсем Кирова вĕлерчĕç. Фашисла разведкăсен заданийĕсем тăрăх ĕçлесе, шпионсемпе сăтăрçăсен троцкисла-бухаринла ушкăнĕ совет халăхĕн туслă çемйинчен миллион ĕççыннисемшĕн тем пекех çывăх Сергей Миронович Кирова—чаплă та ырă большевика, коммуниссен партийĕн паллăран та паллă деятелне, аслă Сталинăн чи çывăх ученикне, соратникне тата тусне—каларса ӳкерчĕç.

Хăйне пĕтĕмпех рабочи клас ĕçне, коммунисăм ĕçне, етемлĕхе ирĕке кăларас ĕçе панă çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ. Паттăр борец, революцин çулăмлă трибунĕ, халăх йуратнă çын пулнăскерĕн пысăк кăмăллă чĕри тапма чарăнчĕ.

Киров вилнĕ пирки ПСК(б)П Тĕпкомĕн членĕсем çырнă çырура Сергей Мироновичăн геройла кунçулне çутатса панă:

„Есĕ, хамăр çĕршывра социалисăм çĕнтерĕвĕшĕн пынă йăвăр кĕрешӳ çулĕсенче йаланах пирĕнпе пĕрле пулнă. Есĕ, пирĕн партире сулăнчăксем тата йăвăрлăхсем пулнă çулсенче те йаланах пирĕнпе пĕрле пулнă. Есĕ йулашки çулсенчи йăвăрлăхсенче те пирĕнпе пĕрлех пурăнса иртертĕн. Епĕр сана хамăрăн çĕршыв пит те пысăк çĕнтерӳсем тунă чухне хамăр ретсен çухатрăмăр. Çак пур кĕрешӳсенче те, пирĕн пур çитĕнӳсенче те санăн тӳпе пысăк, санăн вăй тата есĕ коммунисăм ĕçне хĕрӳлĕн йуратса ĕçлени пысăк вырăн йышăнса тăрат“.

Пĕтĕм ĕççыннисемшĕн çывăх тата ăнланмала, уçă, тĕрĕс сăмахсем тупма пултарнă Кирова халăх хĕрӳлĕ йуратнă. Йулашки вăхăтра тухса каланă сăмахĕсенчен пĕринче Сергей Миронович çапла каланă:

„...Кунта, çĕр типпин ултă мĕш пайĕ çинче, епĕр кунран кун, сехетрен сехет çĕнĕ, социалисăмла обшчествă туптаннине, ĕççыннисен чăннипех хăватлă пурнăçне тунине куратпăр; **пĕтĕм çĕр чăмăрĕ халĕ икĕ гигантла пысăк, анчах пĕр пек мар çурчăмăра уйăрăлчĕ: пĕрин çинче — сĕм хура каç, тĕттĕмлĕх, йухăнчăклăх тата вилĕ сăмах—вилĕм, теприн çинче—пурнăç, ĕçпе творчествă тата çĕнтерӳ сăмахĕ—çĕнĕ пурнăç патне малала, — çакна курмасăр тăма суккăр пулат. Çавăнпа та, йулташсем, большевиксем текеннисенчен телейлĕрех çынсем çук. Çĕр чăмăрĕн çак çурпайĕнче епĕр сирĕнпе пĕрле çав çĕнтерӳлĕ йалава малала илсе пыратпăр; Ленин халалласа хăварнисене тĕрĕс тытса пырсан, пирĕн йуратнă Сталинăн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пырсан, епĕр çĕнтеретпĕрех“.**

Предателĕ алли Кирова социалисăмла обшчествăн халь туса лартнă чаплă çуртне курма памарĕ. Социалисăмăн калама çук пысăк çĕнтерĕвĕсене халĕ Аслă Сталинла Конституцинче ĕмĕрлĕхе çырса хунă.

Социалисăм ӳсни клас тăшманĕсене питĕ хытă тарăхтарса уртарат. ССР Сойузĕнчи социалисăм ĕçне сăтăр тăвасшăн буржуази, тата уйрăмăнах унăн чи иртĕхсе кайнă представителĕсем — фашисла изуверсем нимĕн умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Пирĕн тăван çĕршывран империалисăм колонийĕ, пирĕн халăхран чурасем туса хурас ĕмĕтпе вĕсем пирĕн çĕршыва шпионсемпе сăтăрçăсене йараççĕ. Халăх ылханнă, ирсĕр троцкисла-бухаринла мерзавецсем фашиссемшĕн шпионаж, сăтăр, диверсисем тума, çынсене вĕлерме питĕ йурăхлă лакейсем пулчĕç.

Хăйсен фашисла хуçисене ырă тăвасшăн, троцкисла-бухаринла сволочсем темле ирсĕр ĕçсем те, темле преступленисем те тăваççĕ, вĕсем пирĕн фабрикăсемпе заводсене капиталиссене, çĕрсене—помешчиксене таварса пама тăрăшаççĕ. Кирова вĕлерни ССР Сойузне капиталисăм таварас преступнăй планăн пĕр сыпăкĕ пулнă.

Кирова вĕлернипе фашисла бандитсемпе шпионсем большевикла парти речĕсене, совет халăхĕн речĕсене пăтрантарса йарасшăн пулнă. Пулмарĕ вăл! Тăшмансен ĕç тухмарĕ! ССР Сойузĕнчи халăхсем большевикла парти тавра, хăйсен йуратнă учителĕн тусĕ—Сталин йулташ тавра тата та чăрах пĕтĕçсе тăчĕç.

Ирсĕр вĕлерӳ пĕтĕм çĕршывĕпе тарăху тăвăлне çĕклерĕ. Çĕлен-калтасене таптаса лапчăтмала, предателсене çĕр çийĕнчен шăлса тăкмала—ĕççыннисен пĕр шухăшлă сасси çавăн пек пулчĕ. Пролетарилĕ диктатурăн хайар хĕçĕ шпионсемпе çынвĕлеренсен фашисла ушкăнĕ çине пырса тиврĕ. Анчах тăшмансем çапах та хĕçпăшалне пăрахман-ха. Çĕмĕрсе аркатнă троцкисла-бухаринла бандăн йулашкисем хирĕç тăма тапаçлапаççĕ. Вĕсене пĕри йулмиччен пĕтермешкĕн питĕ пысăк революцилĕ сыхăлăх кирлĕ.

Хăйĕн партийĕн шанчăклă ывăлĕ, Сталин йулташăн çирĕп ученикĕ пулнă Сергей Миронович ĕççыннисене тăтăшах революцилĕ сыхă пулма вĕрентнĕ, тăшмансен хăтланăвĕсем çинчен ырма пĕлмесĕр асăрхаттарса тăнă.

„Буржуалă контрреволюцин малти отрйачĕ пулса тăнă, ăна çĕнтерсе пыракан социалисăма хирĕçле кĕрешӳре идейлă-политикăла, тактикăла тата организацилĕ хĕçпăшал паракан троцкисăм çине пирĕн уйрăмăнах хайаррăн пăхмала“, тенĕ Киров йулташ.

Кировăн сăмахĕсем нихçан та ĕçрен уйăрăлса тăман. Киров 1917 çулччен те меншевиксене çĕмĕрнĕ, 1917 çулхине те тата ун хыççăнхи çулсенче те вĕсене çĕмĕрнĕ тата питленĕ. Бакура чухне Киров троцкиссемпе буржуалă националиссене çĕмĕрнĕ, унтан кайарах, Ленинградра, зиновйевецсене, троцкиссене, сылтăмрисене пĕр хĕрхенӳсĕр тăрă шыв çине кăларнă.

Тăшмансене хайаррăн тытнă тата пĕтĕм ĕмĕр тăршшĕнче—йулашки сывлăшне тухиччĕнех—большевикла парти интересĕсене, тăван çĕршыв интересĕсене сыхланă Мироныча халăх питĕ ăшшăн тата хĕрӳлĕ йуратнă. Кировăн пĕтĕм пурнăçĕ —революцилĕ çирĕплĕхпе хăйулăх образецĕ.

Киров йулташ нушалăхран тухнă çын пулнă. Савăнăççăр ачалăх унăн ăшĕнче експлоататăрсен тĕнчине хирĕç протест туйăмне çĕкленĕ.

Киров йулташ хăйĕн пурнăçне çамрăк чухнех ĕмĕрлĕхех социалисăмла революципе çыхăнтарнă. Уржумри политикăла ссыльнăйсем унăн пирвайхи учителĕсем пулнă. Революци азбукине вĕреннĕ çĕрте прокламацисем унăн пĕррремĕш пособийĕ пулнă.

Киров большевикла партин хăйулă боецĕ, рабочи класа самодержавин режимне хирĕç, капиталиссемпе помешчиксене хирĕç çапăçма организациленĕ пулнă. Киров йаланах Ленинăн—Сталинăн шанчăклă соратникĕ пулнă.

1905 çулта инçетри Çĕпĕрте вăл рабочисене хĕçпăшаллантарнă, вĕсене социалисăмăн аслă тĕллевĕсемшĕн пĕтĕм пурнăçа парса кĕрешме вĕрентнĕ. Тĕрмесем те, хĕсĕрленисем те, вăрттăн ĕçленĕ чухнехи йăвăрлăхсем те Киров ĕмĕтне хуçма пултарайман. Патша йĕркин йунлă репресийĕсем унăн кĕрешес ирĕкне, çирĕплĕхне тата хăйулăхне пушшех пиçĕхтернĕ. Патша полицийĕ Кирова пĕрре кăна мар арĕсленĕ. Анчах вăл нихçан та революцишĕн ĕçлеме чарăнман.

1917 çул. Киров Владикавказра. Уйрăмăнах пысăк çавăрнăçулăх, Терек çинчи нацисем хушшинчи тата класлă хутшăнусен пĕтĕм çивĕчлĕхне тĕрĕс хисепе илме пĕлни, калама çук чаплă организаторла тата ораторла пултарулăхсемпе çыхăннă вĕçĕмсĕр пысăк тимлĕх Киров йулташа никам хавшатайми авторитет туса панă. Киров, большевиксен пĕчĕк ушкăнĕпех, соглашателсене тасатса, Аслă Октябĕрĕн геройла кунĕсем тĕлне Владикавказ совечĕн йышлă пайне хăйсем йенне çавăрма пултарнă. Киров Петрограда Пĕтĕм Российри советсен иккĕмĕш сйесне кайса, Октябĕрти хĕçпăшаллă восстание хутшăнат.

Революцин харсăр салтакĕ, Сергей Миронович граждан вăрçин йăвăр та çивĕч çулĕсенче хăйне пĕтĕм çулĕшне кăтартат. Киров рабочи класăн чи пултарулă полководцисенчен пĕри пулнине çĕршыв часах курчĕ.

Астрахане хӳтĕлесе çапăçнă чухне тата шургвардейцăсемпе интервентсене аркатса тăкса хыççăн хăваланă вăхăтра Сергей Миронович хăйне вĕçĕмсĕр хăйулă, çирĕп тата паттăр тытнине кура, массăсем Кирова шутсăр хытă йуратнă.

Астрахане хӳтĕлес ĕçе Киров питĕ йăвăр обстановкăра, апат-çимĕçсем те, çар хатĕрĕсем те çитмен, тылра контрреволюцилĕ пăлхавсем пулса иртнĕ вăхăтра йертсе пынă.

Деникинпа Колчак пĕрлешесшĕн пулнă, ăна тума вĕсен Царицына тата Астрахане çавăрса илмелле пулнă. Иудушка-Троцки хăйĕн преступнăй ĕçĕсемпе шургвардейцăсене çул уçса пынă: „фронта тӳрлетес“ тесе, вăл Хĕрлĕ çара Астраханьрен тухма хушнă. Анчах кунта Троцкийе хирĕç Киров çирĕппĕн тăнă. XI-мĕш арминчи революцилĕ çар совечĕн членĕ Киров йулташ—Троцкин сутăнчăклă тактикипе хирĕç протесленĕ. **„...Астрахань крайĕнче пĕр коммунист та пулин пур чухне Атăл тинĕсе кĕнĕ вырăн советсен пулнă та, пулат те“,**—тенĕ Киров. Ленин Кировăн позицине ырланă, Астрахане вĕçне çитиччен сыхлама хушса директива панă.

Шургвардейцăсене аркатса тăкнă хыççăн епĕр Киров йулташ Азербайджан большевикĕсене йертсе пыракан постра тăнине куратпăр,—Серго Орджоникидзепе пĕрле вăл Кавказ Лешйенче Совет влаçĕ организацилет. Бакури нефт промыслисем—халăх хуçалăхĕнчи çапăçулă участкисенчен пĕри. Киров Бакури аркатса тăкнă нефт хуçалăхне çĕнĕрен йусаса, ура çине тăратнă.

XIV-мĕш сйес хыççăн парти Киров йулташа питĕ ответлă задачă парат—Ленинград организацине йертсе пыма тата ăна зиновйевецсен шайкинчен тасатма хушат. Ленинградра çирĕп, хăйулă, шанчăклă алă кирлĕ пулнă та, парти унта Кирова йанă. Калама çук çивĕч куçлă пулнипе тата тăшмансене чăтма та пултарайманнипе, Киров Ленинградра троцкиссемпе зиновйевецсен шăршлă йăвине аркатса пăрахма пултарнă.

Парти кулаксен агентурине—ирсĕр изменниксем тата предателсем пулнă Рыкова, Бухарина тата вĕсем майлисене çĕмĕрнĕ чухне те Киров партин тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче тăнă.

Хăравçăсене, епĕр çĕнтерессе шанман çынсене, тăшмансене тăрă шыв çине кăларса пырса, вăл массăсене пирĕн çĕршывра социалисăм татăклăнах çĕнтерессине никам хавшатмала мар çирĕп ĕненнипе çунатлантарнă.

Киров социалисăм строителствин пĕррремĕш класлă маçтăрĕ пулнă. Вăл çĕршыва индустрилес, йалхуçалăхне коллективизацилес сталинла плана чи тимлĕ пурнăçлакан çынсенчен пĕри пулнă.

Кирова час-часах Ленинградри заводсен цехĕсенче, ăслăлăх институчĕсен лабораторийĕсенче, çĕнĕ електростанцисемпе апатит рудникĕсене хывнă тата вĕсене тунă çĕрте, сăнавлă уйсенче, колхозсенче, совхозсенче курма пулатчĕ. Çĕнĕ йышши машинсем, çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем, наукăри нумайĕш открытисем, Запольарйери çĕнĕ хула, инçетри çурçĕрти тулă, Балти тинĕсĕпе Шурă тинĕс хушшинчи канал—çаксем пурте тата Ленинград, Карели, Запольарйе сăнсăпатне улăштарнă ытти йапаласем те Сергей Миронович йачĕпе çыхăнса тăраççĕ. Иксĕлми енергилĕ, калама çук тинкерӳлĕ тата массăсене питĕ аслă организацилеме пултаракан çын пулнăскер, Киров пысăк масштаблă государствă деятелĕ пулнă.

Партин шанчăклă ывăлĕ Киров массăсене йаланах большевисăм йăлисем тăрăх ĕçлеме вĕрентнĕ: унăн вут-кăварлă сăмахĕ большевикла кадрсене пуйанлатнă, пиçĕхтернĕ. Киров каланă:

„Пирĕн ĕçе, йулташсем, никам та айала тума пултараймаст, анчах пирĕн строителсен аслă çарĕ пуршăн çеç мар,—епĕр строителствă ĕçне историлĕ тĕрĕс çул çинчен нихçан та айакка пăрăнса кайман архитектор планĕ тăрăх туса пынă пирки те,—пирĕн архитектор—пирĕн, ленинисăмпа хĕçпăшалланнă, никам çĕнтерейми большевикла парти“.

„Малта, йулташсем, пирĕн парти умĕнче, гигантла задачăсем тăраççĕ; нумайĕшне епĕр йулташсем, пурнăçа кĕртрĕмĕр, анчах унтан та ытларах пирĕн малашне тумалисем йулнă. Социалисăм стройкине малала ăнаçлăн сарса пыма обйективлă кирлисем пирĕн пĕтĕмпех пур.

Чи кирли çинчен шухăшлас пулат—пирĕн пĕр йапаларан шăратса тунă пек çирĕп икĕ миллионла ленинла парти чăннипех чулту пек тăтăр; çĕнтерӳлĕн ӳсекен социалисăм çулĕ çинче кам урлă тăрат, çавсен пуçĕсем пурин те çав чултăва çапăнса саланччăр“.

Коллектив вăйне, ăна никам та çĕнтерме пултарас çуккине тарăннăн шанни, партине тата унăн çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн йуратни тата парăнни Кировăн пур выступленийĕсенче те уççăн палăрса тăнă.

„Сталин пек гигантла урăх фигурă пуррине аса илме те йăвăр. **Йулашки çулсенче, Ленинсăр ĕçлеме пуçланă вăхăтранпа, епĕр пирĕн пĕр çавăрну та, пĕр мĕнле те пулин пысăк пуçару та, лозунг та, пирĕн политикăри пĕр направлени те Сталинсăр пуçне урăх çын кăтартнипе пулнине пĕлместпĕр.** Тĕп ĕçсем пурте — ăна пĕтĕм парти пĕлсе тăмала — Сталин йулташ кăтартнипе, пуçарнипе тата йертсе пынипе пулса пыраççĕ. Тĕрлĕ çĕршыв халăхĕсем хушшинчи политикăн чи пысăк ыйтăвĕсене унăн кăтартăвĕсем тăрăх пурнăçлаççĕ, тата çак пысăк ыйтусем çеç мар, çийелтен пăхсан виççĕмĕш вырăнта йе вуннăмĕш вырăнта тăнă пек туйăнакан ыйтусем те, вĕсем пирĕн çĕршыври рабочисене, хресченсене тата пĕтĕм ĕççыннисене тивеççĕ пулсан, интереслентереççĕ ăна“.

Хăйĕн хастарлă сăмахĕсенчен пĕринче Киров çапла каланă:

„Йулташсем, нумай ĕмĕр кайарах аслă математик çĕр чăмăрне çавăрса йамашкăн тайăнмали вырăн—опорă шыранă. Ĕмĕрсем иртрĕç те, халь çав опорăна тупнă çеç мар, ăна епĕр хамăр алсемпе тӳрăмăр. Нумайах çулсем те иртмĕç, епĕр сирĕнпе пĕрле, пирĕн Совет çĕршывĕнчи социалисăм çĕнтерĕвĕсем çине тайăнса, çĕр чăмăрĕн икĕ пайне те, коммунисăм çулĕ çине çĕклесе тăратăпăр“.

Чăн та, тĕнчене çавăрмали опорăна тупнă та, тунă та, капиталисăмăн тăвăллă тинĕсĕнче вăл опорă гранитлă ту пек çĕкленсе тăрат. Тĕнче историйĕн рычагĕ — шанчăклă та тӳрĕ алăсенче, коммуниссен партийĕпе унăн аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн аллинче.

Л. Берия

Çулăмлă боец*)

Пирĕн партин пысăк деятелне, Сталин йулташăн çывăх тусĕпе соратникне, пролетари революцин çулăмлă трибунне—Сергей Мироновича Кирова тăшмансем тискерĕн вĕлернĕ кунсенче пирĕн шухăшсем ирĕксĕрех хамăр çĕршывăн иртнĕ куçулсенчи паттăрлăха, пайанхи телейлĕ пурнăçа туса панă революцин çулăмне аса илтерет.

Троцкисла-зиновйевла контрреволюцилĕ оппозицин йулашкисем вĕлернĕ Кировăн мухтавлă йатне социалисăм кĕрешĕвĕн историне ĕмĕрлĕхе çырса хунă.

1919 çулта Çурçĕр Кавказ граждан вăрçи çулăмĕнче йалкăшнă. Фронт Хуратинĕсрен пуçласа пĕтĕм Çурçĕр Кавказ урлă каçса Астрахань тĕлĕнче Атăл çине тухнă, тата инçете, Урал патнеле тăсăлнă. Хĕрлĕ Астрахань Колчака Деникинран уйăрса тăнă, вĕсене хăйсен вăйĕсене пĕрлештерме чăрмантарнă. Çав вăхăтрах, Астрахань, Совет Российĕн Кавказ Лешйенĕне çыхăнса тăмали пĕртенпĕр вырăн пулнă.

Англипе Франци флочĕ Хуратинĕсе хăйсен аллинче тытса тăнă. Деникин Терек çинче тата Çурçĕр Кавказра, акăлчансемпе ес-ерсем—Каспий тинĕс лешйенче хуçа пулса тăнă. Кавказ Лешйенне Совет Российĕнчен татса илнĕ, Кавказ Лешйен большевикĕсем—Грузи, Армйан, Азербайджан большевикĕсем Бакупа çыхăну тытнă, унтан вара, питĕ шутсăр вăрттăнлăхпа, вилĕмлĕ хăрушлăха пăхмасăр, Астраханьпа çыхăну тытнă. Астраханьре Совет Российĕн пур тăшманĕсене те хирĕç кĕрешес ĕçе Сергей Миронович Киров йулташ пит те чаплăн организациленĕ, тăшмансене хирĕç вăйлăн кĕрешнĕ.

Баку хулине çак вăхăтра (1919 çулти февральре) Каспий тинĕс лешйенчи англо-есерсен йунлă алличен вĕçерĕннĕ Микойан йулташ килнĕ, вăл Бакури большевикла организацисен пуçне тăнă.

Астрахань уйрăмах акă мĕн пирки пысăк вырăн йышăнса тăнă: çак çулпа, пĕр çак çулпа çеç Бакуран Совет Российĕне нефт илсе пыма май пулнă.

Нефт шутсăр кирлĕ пулнă. Баку большевикĕсем 1918 çулта Совет Российĕне 80 мĕлйун пăт нефт йанă. Çак нефт Хĕрлĕ çара тăшманá хирĕç хайаррăн çапăçма пит те пысăк пулăшу панă. Анчах кунчухлĕ нефт çителĕксĕр пулнă. 1919 çулта Совет Российĕн топливо шутсăр сахал пулнă. Нефт çитмен. Донбаса çуррине шуррисем çавăрса илнĕ.

Ленин тата Сталин Совет Российĕ вальли, Хĕрлĕ çар вальли нефт илес ыйтăва питĕ çивĕччĕн лартнă. Пĕтĕм вăйа нефт илес ĕçе йамала пулнă.

Хăй умне Петровскпа Бакуна турттса илес задачăна лартса, Сергей Миронович, пĕр вăхăтрах Бакуран нефт, чи малтан—бензинпа сĕрмели çусем—илме тивĕçлĕ ĕçсене пурне те тунă.

Муссаватиссен Бакури радиостанци, чăннипе илсен, большевиксен аллинче пулнă, вĕсен унта хăйсен çыннисем пулнă. Çакă вăл Кирова йулташа Бакупа тата Бакура вăрттăн ĕçлекен большевиксен организаципе час-часах çыхăну тытма май панă.

Баку большевикĕсем 1919 çулти май уйăхĕнче Бакури пролетариатăн пысăк массин кĕрешӳне çак лозунгсемпе организациленĕ: „Астраханьпа тавар улăштармала!“, „Российăна нефт турттарар!“. Бакури рабочисен çапăçувĕ май уйăхĕнчи стачкăсенчен пуçланса кайнă. Стачкă ăнăçулă пулман пирки (Микойан йулташ йертсе пыракан стачкă комитетне арĕсленĕ) Çурçĕре нефтепродуктăсем тăратас тĕлĕшпе урăхла ĕçсем тумала пулнă.

Киров йулташ пысăк хăрушлăха пăхмасăр Бакуран Астрахане нефт „киржимсем“ çинче (туркменсен ахаль кимисем çинче) турттарас ĕçе йĕркеленĕ. 1919 çулта, çулла тата кĕркунне, Киров йулташ Астраханьре флотили тунă, унта темиçе деçаткă кимĕ пулнă. Çак питĕ шиклĕ ĕç, вилĕмлĕ хăрушă ĕç пулнă. Çакна тума партипе Совет влаç ĕçĕшĕн чĕререн тăракан çынсем кирлĕ пулнă. Киров хăй çав тинĕс експедицисенче ĕçлеме чи шанчăклă, чи хăйуллă çынсене суйласа илнĕ. Нефтепродуктăсене кимĕсемпех нумай турттарма май килмен, анчах çапах та пурĕ 20 пин пăт ытларах тинĕс урлă каçарнă. Ку вăл Астраханьре тăракан самольотсен ескадрилйине ĕçлеттерме, автотранспăрта çӳретме, Каспий тинĕс çыранĕсенче çапăçакан Хĕрлĕ çар чаçĕсене тăратма çителĕклĕ пулнă.

1919 çулти октябĕрте Деникина çурçĕреле куçма май килнĕ, вăл Воронежпа Орел хулисене çавăрса илнĕ.

Çак вăхăтрах Каспий тинĕсĕн çыранĕсенче—Дагестанра — контрреволюцилĕ добровольцăсен çарĕ сиксе тухнă. Ăна хирĕç Киров йулташ горцăсем хушшинче восстани организацилет. Киров йулташ çак восстанийе питĕ çине тăрса, питĕ пĕлсе хатĕрленĕ, пĕр йенчен кăнтăрала, Баку патнеле кайасшăн, тепĕр йенчен Деникина Орел—Ростов çулĕ çинче çапса аркатмала тăвасшăн тунă.

Татăклă çапăçусемпе татăклă çĕнтерӳсен кунĕсем çитнĕ.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче çĕнтерӳлĕ Хĕрлĕ çар Баку хулине кĕнĕ. Баку хулине Орджоникидзе, Микойан, Киров йулташсем çитнĕ.

1920 çулти майăн 20-мĕшĕнче Киров йулташ Азербайджанри компартин Бакури уççăн ĕçлекен организацин пĕрремĕш конференцинче „Хальхи самана“ çинчен доклад туса панă. „Епĕр кунта,—тенĕ Киров йулташ,—цивилизацилĕ Йевропăри халăхсен тата кайа йулнă культурăсăр текен Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен аслă пĕрлешĕвĕн пуçламăшне тăвăпăр.“

Киров йулташ хăйĕн çак сăмахĕнче нефтшăн—„пурнăçа чĕрлĕх кӳртекен“ нефтшăн тăракан ыйту рабочисемпе хресченсен тăван çĕршывне сыхлас ĕçре пысăк вырăнта тăнине питĕ çивĕччĕн лартнă.

„Халĕ пур йунтымаррисем тăрăх çак чĕрлĕх йунĕ тапат пулсан, çитес уйăхсенче йухăм тата хăвăртрах, тата вăйлăрах пулат. Российăн хуçалăх пурнăçне ура çине тăратассин тĕп ĕçе çакăнта“.

Киров йулташ нефтшăн кĕрешнĕ пĕррремĕш тапхăр çакăнпа иртет.

Киров йулташăн кĕрешĕвĕнче çĕнĕ тапхăр, йуханса çитнĕ нефт хуçалăхне ура çине тăратас тапхăр пуçланат. Киров йулташ пĕтĕм вăйхала хурса нефт хуçалăхне ура çине тăратассишĕн кĕрешет.

Çак тапхăр, Киров йулташ Азербайджанри Коммунисен Партин Тĕп Комитечĕн руководителĕ пулса ĕçленипе тачă çыхăнат.

1921 çул. Граждан вăрçи пĕтнĕ. Советсен çĕршывĕ вăрçă суранлатнисене тӳрлетме, мирлă строителствăна, промышленнăçпа йалхуçалăхне ура çине тăратма вăйа хурса тытăнчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче нефт тата нефт продуктисем çитменни уйрăмах сисĕнне пулсан, вăрçă пĕтнĕ хыççăн çак çитменлĕх тата çивĕчрех пулнă.

Нефт вырăнĕ—Баку пирĕн алăра пулнă, анчах нефт промышленнăçĕ пĕтĕмпех арканса çитнĕ пулнă. Тĕрĕссипе каласан ĕçе йăлтах çĕнĕрен тытăнмала пулнă. Вăйлă аталаннă Америкă техники тăрăх нефт кăлармали тата експлоатацилемели çĕнĕ меслетсене ĕçе кĕртмеле пулнă. Нефта тарăн насуссемпе, компрессорсемпе кăлармала, нефтемотор вырăнне електромотора ĕçе йамала пулнă, нефта çапса ĕçлекен станокпа мар, хăварт ĕçлекен станокпа—врашчателсемпе пăраласа кăлармала тумала пулнă.

Пирĕн партипе правителствă ыйтăва çапла лартнă. Çак ĕçе Сергей Миронович Киров хăйне тивĕçлĕ тимлĕхпе тума тытăннă. Инженерсемпе техниксем—нефтаньниксенчен нумайĕшĕ çеç мар, çавăн пекех уйрăм специалиссем—хуçайственниксем тата коммуниссем те „Азнефта“ урăхлатса çĕнетессине ăнланман.

Кировăн — кайа йулнă, консервативлă елементсен вăрттăн тата уççăн саботажне хирĕç хĕссе те, кăласа ĕнентерсе те кĕрешмеле пулнă.

Киров йулташ большевикла, тĕлĕнмеле пултарулăхпа çине тăрса, вăйхала хурса ĕçленипе, хăйĕн пĕтĕм организаторла талантне хурса ĕçленипе çеç епĕр Азербайджанри нефт промышленнăçне урăхлатса çĕнетес ĕçе питĕ паха вĕçлесе çитерме пултартăмăр.

Киров йулташ Бакура йулашки çул ĕçленĕ вăхăтра (1925 çул) нефт промышленнăçĕ Совет çĕршывне 4.600.000 тоннă нефт панă.

Ку вăл Бакури большевиксен, Бакури нефтаньниксен пысăк çĕнтерĕвĕ пулнă.

Кировăн вăйĕ, ĕçлĕх пултарулăхĕ тĕлĕнмеле пулнă, авторитечĕ питĕ пысăк пулнă. Киров промыслăсенче пулни, рабочисемпе кĕскен, ĕнентермеле калаçни—ĕçе лайăх, хăвăртрах, организацилĕрех кайма çителĕклĕ пулнă.

Хăйĕн умне нефт промышленнăçне урăхлатса çĕнетессине тĕп задачă вырăнне хурса, Киров йулташ Совет Азербайджанĕ умĕнче, пĕтĕм совет Кавказ Лешйенĕ умĕнче тăракан ытти задачăсене те манман.

Вăл Азербайджан йалĕ çине пит те тимлĕн пăхнă.

1920 çулти май уйăхĕнчех, партин Бакури конференцинче, Киров йулташ парти организацисемпе совет оргăнĕсен Азербайджан йалĕнче ĕçлемели политикăла программăна палăртнă.

„Малтан бексемпе хансен стройне татăклă çапмала. Пĕтĕм çĕре ĕçхалăхне нимĕн тӳлевсĕр памала тăвасси çинчен кăларнă декрет бексемпе хансен стройне пуçламĕш хут çапни çеç пулат. Кунта пирĕн, коммуниссен, хамăрăн пĕтĕм вăйа çакăнта именнă вăйлатса йамала, ăна анлăрах, тулирех тумала.

Çакăн хыççăн пирĕн, çавăн пекех тата, капиталисăма революцилĕн çапса хуçасси пулмала. Халĕ Азербайджан мĕнпе пуйан, Хĕвеланăç Йевропăри çĕршывсене мĕнпе илĕртсе тăрат, çавсем çине пурин çине те рабочисемпе хресченле, советла, коммунисла знак лартмала“.

Киров Азербайджана ССР Сойузĕн çĕрмамĕкĕ акса тăвакан иккĕмĕш бази тăвассишĕн нумай ĕçленĕ.

Тӳрксен нацилĕ кадрĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре Киров нумай ĕçленĕ. Халĕ Азербайджанра ĕçлекен çĕршер тӳрк работникĕсем хăйсене тивĕçлипех Киров ученикĕсем, выдвиженцисем тесе шутлама пултараççĕ.

Кавказ Лешйенчи нацилĕ тата политикăла йăвăр лару-тăру Кировшăн лайăх паллă пулнă. Вăл Кавказ Лешйенне пĕлнĕ, ăна йуратнă.

1920 çулта, çулла, Киров йулташ меншевикла Грузипе Тифлисра РСФСР правителствин полпречĕ пулнă. Вăл унта совет çĕршывĕн чăн-чăн представителĕ, Ленинпа Сталинăн представителĕ, Грузири большевикла организацисен чăн-чăн руководителĕ пулнă.

1921—22 çулсенче Кавказ Лешйенчи виçĕ республикăн—Грузи, Армйан, Азербайджан республикисен федерацине тăвас ыйту тухса тăрсан, Киров йулташ унчухне Кавказ Лешйен парторганизацине йертсе пынă Серго Орджоникидзепе пĕрле, Ленин—Сталин идейне пурнăçа кĕртессишĕн вăйлăн кĕрешнĕ. Çулăмлă, хĕрӳлĕ сăмахсенче Киров йулташ ЗСФСР тăвассине хирĕç тăма хăтланнă Грузи, Тӳрк, Армйан сулăнчăкĕсене хирĕç нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешнĕ, вĕсене çапса аркатнă.

Сулăнчăкçсем, троцкиссем, ПСК(б) Парти тĕп çулйĕрне хирĕç кĕрешме хăтланакансем пурте, пирĕн партин çирĕплĕхне хавшатма хăтланакансем пурте Кировра хăйсен вилĕмлĕ тăшманне курнă. Вăл, Киров йулташ, тăшмансен пур вăрттăн тата ултавлă ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса çапса аркатма питĕ лайăх пĕлнĕ.

Именнă çавăнпа та ĕнтĕ, 1925 çулта, аслă Сталин йулташ йертсе пынипе, пирĕн парти троцкисла-зиновйевла оппозицине çапса аркатнă чухне, Киров йулташа ПСК(б)П Тĕпком решенийĕ тăрăх, çав вăхăтри ĕçĕн ответлă участкине—Ленинград большевикĕсен руководителне куçарнă.

* * *

Сергей Миронович Кировăн кĕрешĕвĕпе ĕçĕсен çулĕсене тепĕр хут аса илсе, унăн нихçан манмала мар, ниçтала пăрăнман большевик-ленинецăн, халăхăн çулăмлă трибунин, паха организаторăн, талантлă политикăла руководителĕн, çавăнпа пĕрлех пысăкран та пысăк, чăн-чăн большевикла хуçайственникăн образне çĕнĕрен куратпăр.

Киров тулли пурнăçлă пулнă, вăл пурнăçа йуратнă, вăл пурнăçра социалисăмла революци çĕнтерĕвĕшĕн, коммунисăм идейĕн чапĕшĕн кĕрешмели çул-йĕре курнă.

*)Ку статйана Киров йулташа вĕлерни 1 çул тултарнă йатпа çырнă. Ăна 1935 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче „Правдара“ пичетлесе кăларнă.

Декаберĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Хамăр тăратнă кандидатсемшĕн сасăлар

Пĕтĕм çĕршыв Совет Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет. Декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсем пурте общественнăй организацисемпе ĕçсынни обществисем Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн сасăлама суйлав участкисене пырса суйлав урнисене (йешчĕксене) суйлав бюллетенĕсем йараççĕ.

Халăх тăшманĕсем—Йапони-Германи разведкин шпионĕсем—троцкиссен, зиновйевçăсен, бухаринçăсен, рыковçăсен йулашкисем, сăтăрçăсем, диверсантсем, пуçкасакансем, тĕн çыннисем, сектантсем, тата ыттисем те суйлав кунĕ çывхарса пынă май хăйсен совета хирĕçле, контрреволюцилле агитацине вăйлатса пыраççĕ. Вĕсем пур майсемпе халăха тĕрĕс çул çинчен пăрса йама тăрăшаççĕ. Суйлав тавра тĕрлĕрен суйа сăмах-йумах кăларççĕ, пăртак тĕттĕмрех колхозниксемпе йединоличниксене хăйсене майлă çавăрма тăрăшаççĕ. Вĕсем мĕнле те пулса ĕçсынниссене суйлава сахалтарах кăлармала тăвасшăн. Çак шутпа çамрăксем хушшинче, уйрăмăнах—хĕрачасем хушшинче çул шутне чакарса кăтартмала тăвасшăн. Кунпа пĕрлех вĕсем суйлавçăсем хушшинче суйлав кунĕ суйлавран пăрăнма хĕтĕртеççĕ. Паллах, вĕсене çавăн пек тума май килмест.

Суйлав Положенин 56 тата 57-мĕш статйисем тăрăх, Аслă Совета депутата суйлама кандидат тăратма общественнăй организацисемпе ĕçсынни обществисем (коммунисла организацисем, профессиле сойузсем, кооперативсем, çамрăксен организацийĕсем, културăлă обществăсем) анчах пултараççĕ. Урăх никам та хăй йенчен кандидат тăратма пултараймасть.

Аслă Совета депутата суйлама палăртнă пур кандидатсене те рабочисен, колхозниксен, инженерла-техникла работниксен, служăщчисен пĕрлехи пухувĕсенче тĕплĕн сӳтсе-йавса тăратнă.

Пирĕн республикăран пĕтĕмпе 16 депутат суйламала: Сойуз Советне республикăри кашни 300.000 çынтан шутласа 4 депутат, Националнăçсен Советне Чăваш республикĕнчен 11 депутат, РСФСР-тан Горкий суйлав округĕ тăрăх 1 депутат.

Пирĕн республикăра Аслă Советăн Сойуз Советне суйлама 4 суйлав округĕ тунă:

1) **Шупашкар** суйлав округĕ № 364. Округ центрĕ Шупашкар хули. Округа Шупашкар хулипе Шупашкар районĕ тата Тутаркас, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсем тата Трак районĕнчи 18 йалсовет кĕреççĕ. Шупашкар суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйлама пурте **З. А. Андрейева** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

2) **Канаш** суйлав округĕ № 365. Округ центрĕ Канаш хули. Округа Канаш, Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Шăхасан районĕсем тата Трак районĕнчи 12 йалсовет кĕреççĕ. Канаш суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйлама пурте **Йе. П. Цыганова** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

3) **Улатăр** суйлав округĕ № 366. Округ центрĕ Улатăр хули. Округа Улатăр хулипе Улатăр районĕ, Патăрйел, Шăмăршă, Йĕпреç, Турхан, Шăнкăртам, Купакинă районĕсем тата Пăрачкав районĕнчи 15 йалсовет кĕреççĕ. Улатăр суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйлама пурте **Л. С. Спасов** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

4) **Çĕмĕрле** суйлав округĕ №367. Округ центрĕ Çĕмĕрле хули. Округа Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕ, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Елĕк, Йетĕрне тата Пăрачкав районĕнчи 9 йалсовет кĕреççĕ. Çĕмĕрле суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйлама пурте **А. М. Краснов** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

Аслă Советăн Националнăçсен Советне РСФСР-тан депутат суйлама Горкий суйлав округĕ тăрăх **Чăваш республикĕнчи пĕтĕм суйлавçăсем В. П. Чкалов йулташ кандидатуришĕн** сасăлаççĕ.

Пирĕн республикăран Националнăçсен Советне депутата суйлама 11 суйлав округĕ тунă:

1) **Шупашкар** суйлав округĕ №496. Округ центрĕ Шупашкар хули. Округа Шупашкар хули, Тутаркас районĕ тата Ишлей районĕнчи 23 йалсоветĕ кĕреççĕ. Шупашкар суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **А. И. Стецкий** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

2). **Шупашкар йал** суйлав округĕ № 497. Округ центрĕ Шупашкар хули. Округа Шупашкарпа Сĕнтĕрвăрри районĕсем тата Ишлей районĕнчи 8 йалсовет кĕреççĕ. Шупашкар йал суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **М. М. Сахйанова** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

3). **Çĕрпӳ суйлав** округĕ №498. Округ центрĕ Çĕрпӳ хули. Округа Çĕрпӳпе Трак районĕсем тата Шăхасан районĕнчи 11 йалсовет кĕреççĕ. Çĕрпӳ суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **П. Д. Краснов** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

4). **Вăрмар** суйлав округĕ №499. Округ центрĕ Вăрмар станци. Округа Вăрмарпа Куславкка районĕсем тата Тăвай районĕнчи 4 йалсовет кĕреççĕ. Вăрмар суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **Г. И. Иванов** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

5). **Канаш** суйлав округĕ № 500. Округ центрĕ Канаш хули. Округа Канаш районĕ, Шăхасан районĕнчен 12 йалсовет, Тăвай районĕнчи 16 йалсовет кĕреççĕ. Канаш суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **А. Ф. Горкин** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

6). **Йĕпреç** суйлав округĕ № 501. Округ центрĕ Йĕпреç станци. Округа Йĕпреç, Турхан, Шăмăршă районĕсем кĕреççĕ. Йĕпреç суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **С. К. Коротков** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

7). **Патăрйел** суйлав округĕ № 502. Округ центрĕ Патăрйел. Округа Патăрйел, Йелчĕк, Шăнкăртам районĕсем кĕреççĕ. Патăрйел суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **О. Т. Харитонова** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

8). **Улатăр** суйлав округĕ № 503. Округ центрĕ Улатăр хули. Округа Улатăрпа Кувакино районĕсем кĕреççĕ. Улатăр суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **Т. А. Моисейева** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

9). **Вăрнар** суйлав округĕ № 504. Округ центрĕ Вăрнар станци. Округа Елĕк районĕ тата Вăрнар районенчи 29 йалсовет кĕреççĕ. Вăрнар суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **П. И. Пумпур** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

10). **Çĕмĕрле** суйлав округĕ № 505. Округ центрĕ Çĕмĕрле хули. Округа Çĕмĕрлепе Пăрачкав районĕсем тата Вăрнар районĕнчи 5 йалсовет кĕреççĕ. Çĕмĕрле суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен советне депутата суйлама пурте **И. В. Новиков** йулташ кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

11). **Йетĕрне** суйлав округĕ № 505. Округ центрĕ Йетĕрне хули. Округа Йетĕрнепе Хĕрлĕ Чутай районĕсем кĕреççĕ. Йетĕрне суйлав орругне кĕрекен суйлавçăсем Националнăçсен Советне депутата суйлама пурте **А. М. Розанов** йулташ кандидатуришĕн çасăлаççĕ.

Çак кандидатсемпе пур общественнăй организацисемпе ĕçсынни обществисем те: коммунисла организацисем, професиле сойузсем, кооперативла организацисем, çамрăксен организацисем, културă обществисем пурте килĕшеççĕ. Çак организацисемпе обществăсем, рабочисен, колхозниксен, инженерла-техникла работниксен, служăщчисен пĕрлехи пухувĕсем пурте çак кандидатсем çинче чарăнса тăчĕç. Çак кандидатсем республикăри пĕтĕм рабочисем, пĕтĕм колхозниксем, пĕтĕм служăщчисем, пĕр сăмахпа каласан—пĕтĕм халăх кăмăл тăвакан, хапăл туса йышăнакан, килĕштерекен, йуратакан, хисеплекен кандидатсем. Пĕтĕм халăх Чăваш республикĕнчен Аслă Совета депутата çак йулташсене суйласа йарасшăн. Паллах, декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлава тухса пирĕн суйлавçăсем çак кандидатсемшĕн сасăлаççĕ.

Пирĕн республикăри кашни суйлавçăн виççĕр депутат суйламала пулать. Илĕпĕр сăмахран Вăрмар районне. Вăрмар районĕнчи суйлавçăсем Аслă Советăн Сойуз Советне Канаш Суйлав округĕнчен Йе. П. Цыганова кандидатуришĕн, Аслă Советăн Националнăçсен Советне Горкий Суйлав округĕнчен В. П. Чкалов кандидатуришĕн, Аслă Советăн Националнăçсен Советне Вăрмар Суйлав округĕнчен Г. И. Иванов кандидатуришĕн сасăлаççĕ. Çавăн пекех Куславкка районĕнче те: Сойуз Советне Канаш Суйлав округĕнчен Йе. П. Цыганова кандидатуришĕн, Националнăçсен Советне Горкий Суйлав округĕнчен В. П. Чкалов кандидатуришĕн, Вăрмар Суйлав округĕнчен Г. И. Иванов кандидатуришĕн сасăлаççĕ.

Çапла ĕнтĕ пирĕн пур суйлав участкисенче те суйлавçăсем виççĕр бюллетен илеççĕ. Илĕпĕр каллех çав Вăрмар районнех. Суйлавçă суйлав кунĕ, декаберĕн 12-мĕшĕнче, суйлав участкă комиссисекретарĕнчен 3 бюллетен илет. Пĕр бюллетенĕ шурă тĕслĕ. Унта Сойуз Советне депутата суйлама тăратнă Йе. П. Цыганова кандидатурине çырнă, ăна хăш организацисем тăратнине кăтартнă. Тепĕр бюллетенĕ кăвак тĕслĕ. Унта Националнăçсен Советне РСФСР-тан Горкий Суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама тăратнă В. П. Чкалов кандидатурине çырнă. Виççĕмĕш бюллетенĕ çутă симĕс тĕслĕ. Унта Националнăçсен Советне Чăваш республикĕнчен депутата суйлама Вăрмар Суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ Г. И. Иванов йулташ кандидатурине çырнă. Бюллетенсем çинче урăх кандидатурăсем çук.

Хамăр çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене кӳртсе çырнă бюллетенсене хăй аллипе илнĕ хыççăн, паллах, кашни суйлавçă, хамăр çĕршывăн телейлĕ те илемлĕ пурнăçĕшĕн, унăн малашлăхĕшĕн тăракан, хăйĕн тăван çĕршывне пĕрмайах чечеклентерсе пырассишĕн, çĕршывăн оборонă тĕрекне пĕрмайах вăйлатса пырассишĕн тăракан суйлавçă—бюллетенсем çинче кăтартнă кандидатсемпе тата тепĕр хут паллашать те, бюллетен çинчи йата çаплипех хăварса (хуратмасăр), канверт ăшне чиксе урнăна (йешчĕке) йарать. Суйлавçă бюллетен çине хăй йенчен сĕнĕрен урăх кандидатурă кӳртме пултараймасть. Кун пирки Вышинский йул. çапла ăнлантарса парать: сасăланма Округ суйлав комиссисенче хăй вăхăтĕнче регистрациленĕ кандидатсем анчах пултараççĕ. Хăй вăхăтĕнче регистрацилемен, суйлав бюллетенне кӳртменсынсем кандидата тăма пултараймаççĕ. Çавăнпа та суйлавçă суйлав бюллетенĕ çине сĕнĕрен нимĕнле кандидат та тăратма пултараймасть. Вăл бюллетен çине хăй йенчен сĕнĕрен кандидат хушса çырать пулсан, вара унăн сасси ахалех сухалать, вăл бюллетене суйлав комиссисем йышăнмаççĕ.

Çавăнпа та епĕр пур тӳрĕ кăмăллă, тӳрĕ шухăшлă, совет власĕн тĕреклĕхĕшĕн тăрăшакан суйлавçăсене тăшманăн маслочĕсем çинчен асăрхаттарса хурас терĕмĕр.

Тăшман: бюллетен çинче пĕр йат анчах пулни вăл—чăн-чăн демократилĕ суйлав мар тепине ан итлĕр, ан ĕненĕр ăна. Декаберĕн 12-мĕшĕнче пурте суйлава тухса суйлав округ комиссисенче регистрациленĕ кандидатсемшĕн сасă парăр:

Колхоз йышĕ ӳсет

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Мăн Йамаш йалсоветне кĕрекен „Заря" колхозра çак кунсенче çĕнĕрен 4 хуçалăх колхоза кĕчĕç. Çавнашкалах Блӳхер йачĕпе таракан колхоза 2 хуçалăх, Йенкĕлтри „Хĕрлĕ майак" колхоза 2 хуçалăх, „Мотор" колхоза 1 хуçалăх хутшăнчĕç.

Аслă Совета суйлама хатĕрленнĕ май колхоза кĕрес текенсем татах та нумай.

В. Захаров. Й. Сигайев.

Ш[illegible]пашкарти суйлав умĕнхи канашлу

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Кандидатсен пурнăçĕпе паллашаççĕ

Шупашкарти кооптехникумра суйлава хатĕрленнĕ май кружоксем тимлĕ ĕçлеме тытăнчĕç. Хор кружокĕ çĕнĕ йурăсем, физкултурă кружокĕ çĕнĕ упражненисем вĕренеççĕ. ПВХО кружокĕн занятийĕсем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Халĕ 43 студент ПВХО значокне илчĕç.

Кооптехникум çуртĕнче — суйлав участкин центрĕ. Пӳлĕмсене капăрлатса çитернĕ. Уйрăм кĕтес туса, Совет Сойузĕн 20 çул хушшинчи ӳсĕмĕсене кăтартакан диаграммăсемпе плакатсем çакнă.

Декаберĕн 12-мĕшне ваљфи уйрăм ларйок уçнă. Халĕ ку ларйок тĕрлĕрен апат-çимĕç тавращĕсемпе сутă тума тытăнчĕ.

Нойаберĕн 25-мĕшĕнче 13-мĕш №-лĕ участкăри суйлавçăсен аслă пухувĕ пулса иртрĕ. Ку пухура Националнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен — Стецки тата Чкалов йулташсен биографийĕсемпе тĕплĕн паллашрĕç. Тата Сойуз Советне суйлама кандидата тăратнă З. Андрейева йулташăн биографине каласа пачĕç.

Пухура тухса калакансем пурте: Чкаловшăн, Стецкишĕн, Андрейевăшăн сасăлатпăр, терĕç.

Гр. Абрамов.

Канмали кунсенче активиссем суйлавçăсем патĕнче пулаççĕ

Канашри вагонсем йусакан заводри 8-мĕш №-лĕ суйлав участкинче суйлавçăсем хушшинче агитаци ĕçне тума пурĕ 23 пропагандис уйарнă. Вĕсене уйрăм çуртсем çумне çирĕплетнĕ. Пропагандиссем план тăрăх ĕçлеççĕ. Нойаберĕн 20-мĕшĕнче общежитисенче суйлавçăсене „Капиталисла çĕршывсенче тата пирĕн çĕршывра суйлавсем мĕнле иртни çинчен" ăнлантарса панă. Çак кунсенче агитаторсем суйлавçăсене „Патша вăхăтĕнче суйлавсем мĕнле иртни çинчен" каласа пама хатĕрленеççĕ.

Агитаторсем кашни канмали кунах общежитисене кайса суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса параççĕ. Вăл кун кашни çуртрах агитатор ĕçлет. Нойаберĕн 18-мĕшĕнче агитаторсем суйлавçăсем патне киле кайса калаçусем иртернĕ. Вăл калаçусене итлеме мĕн пур суйлавçăсенчен 70—75 процент таран пухăннă.

Суйлавçăсене „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положнине" ытлăн-çитлĕнех салатса панă. Суйлав участкинче суйлав пирки кăларнă кĕнекесен выставки пур. Суйлавçăсем вăл кĕнекесене вулама илме пултараççĕ. Кунсăр пуçне хăшпĕр общежитисенче хĕрлĕ кĕтессем тунă. Унта суйлав çинчен çырнă кĕнекесем пур. Агитаторсем тĕрлĕрен ыйтусем çине ответсем параççĕ. Çакăн пек хĕрлĕ кĕтессем 8-мĕш №-лĕ участкăра 12 çуртра ĕçлеççĕ.

Значоксем илчĕç

Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ.

Нойаберĕн 7-мĕш тĕлне 78 студент ПВХО, 16 студент Ворошилов пек тĕл перекенсен тата 11 студент ГТО значокĕсем илчĕç.

Архипов.

Пирĕн кандидатсем

Олга Харитонова

Кивĕ пĕчĕк пӳрт, çĕмрĕк чӳречесем. Кĕрхи сивĕ çил пӳрте витĕрех кĕрет. Пӳртре тумтирсĕр ларма-тăма çук, сивĕ сывлăш, нӳр çаплах чĕрене витет. Пӳртне хутма вутти çук, çийе тăхăнма тумтирĕ çук. Çакнашкал килте шăнса суккăрланнă Олга Кипеçри пуçламĕш шкулта йулашки çул вĕреннĕ чух. Вăл икĕ уйăх сĕм курми выртнă. Тем пек йăвăр асаплă пурнăçпа пурăнсан та вăл пуçламĕш шкула лайăх вĕренсе пĕтернĕ Ку 1913 çулхине пулнă.

Унăн пуçĕнче малала вĕренме кайас шухăш вĕресе тăнă. Анчах тепĕр йенчен ăçта кайса мĕнле майпа вĕренме кĕрес ыйту пуçне çĕмĕрнĕ.

Пăртак вăхăт иртсен Олга Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕме кайать. Вĕренме тынисем питĕ нумайах пулмасан та Олгăна шкула илмеççĕ. Мĕншĕн тесен вăл пуйан ывăл-хĕрĕсем пек шкул пуçлăхне чĕреспе пыл йе така тушки парса кăмăл тăвайман. Çынна ĕçкĕ çикĕ пама мар, хăй те выçăла тутăлă çеç пурăнкаланă. Пăртак пурăнсан Олгă Йелчĕкри икĕ класлă шкула кĕрсе унтан лайăх вĕренсе тухать. Çакăнтан унăн малала вĕренме кайас çулĕ уçăлас вырăнне, çук пурнăçпа, хунланса ларать. Кулак ачисем чухăн хĕрĕ вĕренме кайаймасăр йулнишĕн савăнса йал хушшинче елек сараççĕ.

— Ей, çав выçăскертен вĕренесси пулать-и?

—Вăл килте ĕçлеме ӳркенсе шкулсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрет,—тенĕ вĕсем.

Ним тума аптăранă йенне Олга Хусана тухса кайать. Кунта вăл шкула кĕреймен йенĕпе машинисткăна вĕренме кĕрет. Курсра вĕренсе хватерте пурăннăшăн, унăн курс хуçи патĕнче тарçăра ĕçлемеле пулнă. Çамрăк хĕр уроксем хыççăн хуçа патĕнче пӳрт ăшчикки тасатать, кĕпе çăвать, шыв йăтать, ача пăхать, апат хатĕрлет, анчах хăй урайĕнче выртса тăрать, апат йулашкисемпе тăранса пурăнать.

Кĕтмен çĕртен Олга тĕлне татах инкек сиксе тухать. Çĕтĕк тумпа çӳресе шăнса унăн куçĕсем пăсăлса кайаççĕ.

— Санран, суккăртан ним усси те çук,—çак усал сăмахсемпе хăваласа кăларса йарать ăна хуçа. Çĕр варринче вăл пĕр пĕччен Хусан урамĕ хушшинче йӳçĕ куççул тăкать. Ăна никам та шеллекен çук. Пĕр хĕллехи сивĕ çил çеç çĕтĕк сăкман аркисене тулласа, усал йытă пек уласа Олгăн мĕскĕн чунне хăратать. Çапла ĕнтĕ унăн куçне йусассишĕн килне таврăнмала пулнă. Хусанта болницăсем пулнă пулин те, вĕсен çывăхне те пыма çук, патне пырсанах чухăн çынсене кайала тавăрса йанă.

Олга пысăк асап чăтса куçне килте сыватать. Сывалса килсен курс хуçи ăна каллех вĕренме йышăнать, анчах хватер памасть. Олгăшăн татах пысăк хуйхă. Хусан хулинче вĕт чухăн хĕрĕшĕн хватер тупма питĕ хĕн. Çавăнпа та ăна татах питĕ йăвăр ĕçсем туса нумай хĕн курма лекнĕ. Ун çинчен вăл хăй çапла каласа парать:

— Машинисткăна вĕренсе тухас тесе епĕ мĕнле те пулин хватер тупма тăрăшрăм. Вара пĕр улпут патне ача пăхма кĕтĕм. Вĕсем мана талăкра икĕ сехет вĕренме ирĕк пачĕç. Ытти вăхăтра манăн вăхăт ача пăхма çеç мар, кухаркă, прачкă вырăнĕнче ĕçлесе иртечĕ. Çурçĕр иртсе икĕ-виçĕ сехетчĕн ача кипкисем çăваттăм. Кипкисене тем пек тăрăшса çусан та, хуçа арăмĕ: таса çуман,—тесе ывăтса йарачĕ те тепĕр хут çĕр сывăрмасăр çутарачĕ. Темчул тăрăшса ĕçлесен те, пĕр пус укçа та памасчĕç. Ирĕре хуçа 15 пус укçа пачĕ те, ăна та арăмĕ кайала туртса илчĕ. Вара епĕ вĕсем патĕнчен прачкăра ĕçлекен пĕр хĕрарăм патне пурăнма куçрăм. Хватер укçи тӳлес вырăнне ăна кĕпе çăвас ĕçре нумай пулăшаттăм. Ку хватерте пăртак ирĕккĕнрех вĕренме май пурри мана питĕ савăнтарчĕ. Епĕ часах гимнази программипе вĕренмели пĕр частник уçнă курса кĕтĕм. Ку курсра кунне 4 сехет вĕренмелеччĕ. Вĕренӳре йулса пыракансене пулăшнăшĕн епĕ çакăр илмелĕх, трамвайпа çӳремелĕх укçа та тупкалаттăм.

Çапла ĕнтĕ унăн иртнĕ пӳçĕ пурнăçĕн хăшпĕр сыпăкĕсем. Вăл тем пек асап, мăшкăл чăтса тӳснĕ, анчах нихăçан та пуç усман.

1917 çулта ирсĕр мулхуçисене сирпĕтнĕ хыççăн ăна вĕренме аслă çул уçăлать. Вăл йалта пăртак пурăнсан кĕрхи сивĕ çăмăр витĕр Тетĕçри учителсем хатĕрлекен семинарине кĕме тухса утать. Семинаринче ăна тӳрех иккĕмĕш курса илеççĕ. Олга Тихоновна хăйĕн вĕренӳри пултарулăхĕпе студентсем хушшинче пысăк авторитет илет, 1918 çулхине комсомола кĕрсе общественнăй ĕçе хастарлăн хутшăнать. Темчул пуçмăр чăтнă, асаплăха сирсе йанă хыççăн унăн çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре хастарлăх ӳсет.

Вĕреннĕ вăхăтрах вăл ача çуртĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлесе унта тăлăх тата батрак, чухăн çынсен ачисене илет. Кунпа пĕрлех вăл ача сатне йертсе пырать, пионер отрйад вожатăйĕ те хăйех.

Семинаркăчен вĕренсе тухсан, лайăх вĕреннине шута илсе, Олга Тихоновнана Мăрата шкул пуçлăхĕ пулса ĕçлеме йараççĕ. Йала çитсенех вăл шкул ĕçне тирпейлесе çитерет, комсомол йачейки организацилет. 1922 çулта çак йалтах Олга Тихоновна парти кандидатне кĕрет. Йалти актива пĕтĕçтерсе совет ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе нумай ĕçлет, хĕрарăмсен пухăвĕсенче политикла ыйтусемпе докладсем тăвать, комсомолецсемпе стена хаçачĕ кăларса, ун урлă совет власне хирĕç пыракан йалти клас тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса вĕсемпе вирлĕн кĕрешет.

1924 çулта Олга Тихоновна парти членне кĕрет. 1926 çулчен вăл питĕ ответлă обчăлă ĕçсенче çĕнĕ пурнăç тăвасшăн кĕрешет.

1926 çул. Олга Тихоновна хăйĕн тăван йалĕнче пуçламĕш шкул пуçлăхĕ. Унăн вăхăчĕ кунĕн-çĕрĕн шкулта иртет. Урокссем хыççăн хресченсем шкула хăнасем йăтаççĕ. сценă тăваççĕ, каçсенче спектаклсем лартаççĕ. Ĕлĕк Олга Тихоновнаран мăшкăласа кулнă йалти Андрейев, Федоров—кулаксем уççăн сăмах чĕнмесĕр вăрттăн елек сарма пуçлаççĕ. Анчах Олга Тихоновна пĕтĕçтернĕ йалти актив клас тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсене вăхăтра çапса салатса пырать.

1927—28 çулсенче О. Т. Харитонова йулташ Кипеçре çеç мар, пĕтĕм таврари йалсенче (Нĕркеç, Мăнтăр, Хирхи Сĕнтĕр тата ыт. те) тырпул хатĕрлес, културлăхă хăпартас, укçа-тенкĕ пухас ĕçсенче конкретлă пулăшса пырать. Çак йалсенче вăл пĕтĕçтернĕ чухăнсен ушкăнĕсем кулаксенчен ытлашши тырра туртса илес тĕлĕшпе питĕ вирлĕ ĕçлеççĕ. Çак йалсенчех Харитонова йулташ пулăшнипе колхозсем организациленĕ. Ахалтен мар ĕнтĕ Кипеçри „Трактор" колхоз членĕсем: Харитонова йулташ Сталин вĕреннĕ тăрăх ĕçлесе пирĕн йала пуйан та културлă пурнăç çулĕ çине кăларчĕ,—теççĕ.

„Трактор" колхоз 1929 çулта 9 хуçалăхран пĕрлешнĕ. Халхи вăхăтра колхозра 61 хуçалăх пĕрлешсе тăрать. Колхозăн 40 лаша пур, çĕр ĕçне йалхуçалăх машинĕсемпе тăваççĕ.

Колхозниксем пурте ĕнелĕ, кăçал кашни колхозникех çĕршер пăт тыра илет. Колхоза кĕнĕренпе нумайĕшĕ çĕнĕ пӳрт лартнă.

— Кипеç пĕтĕмпех урăхланчĕ, çав пĕчĕк йала та хула çăмĕ кĕчĕ,—теççĕ йут йалсем те. Акă мĕншĕн тав тăваççĕ. Кипеç колхозникĕсем хăйсене ăс парса ăнлантарсаколхоза кĕртнĕ Олга Тихоновнăна.

Харитонова йулташа Кипеçпе ун таврари йалсенче çеç мар. пĕтĕм районĕпех пĕлеççĕ. Вăл обчăлă ĕçре ырми-канми ĕçлесе, тата халхи вăхăтра хăй директорта ĕçлекен Хирти Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкула кăтартулă туса пĕтĕм республикĕпе хисепе тухрĕ.

Харитонова йулташ чылай çул хушши учителре ĕçлесе вĕрентсе кăларнă çынсенчен нумайĕшĕ инженер, лотчик, тухтăр, агроном, учител пулса ĕçлеççĕ. Вăл ĕçлекен шкултан вĕренсе тухнă ачасем пĕри те малала вĕренме каймасăр йулман, вĕсене кашнине Олга Тихоновна тĕрлĕ шкулсене кĕме пулăшнă.

Халхи вăхăтра Хирти Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкул районра чи паха шкулсенчен пĕри пулса тăрать. Ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырассипе шкула çӳресси питĕ лайăх. Шкул ачисене питĕ тирпейлĕ, културлă пулма Харитонова йулташ ачасене коммунисла вĕрентсе ӳстерес ĕçе болшевикла чĕрине парса ĕçленипе тунă.

Çапла ĕнтĕ О. Т. Харитонова йулташ мĕн пур хăйĕн пурнăçне Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн панă. Вăл социалисăмла ĕçе болшевикла туйăмпа туса халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пынă. Ăна йалти кулаксем кураймасăр унăн çуртне çунтарса та йанă.

Хал, О. Т. Харитонова йулташа Аслă Совета суйлама кандидата тăратсан, халăх тăшманĕсем ун çинчен елек сарма тытăннă. Паллах, тăшманла етемсем пирĕн Аслă Совета суйлама палăртнă тивĕçлĕ Харитонова йулташ çинчен тем каласса çӳресен те, ĕçхалăх масси хăй уйăрнă кандидата варалама памĕ.

О. Т. Харитонова йулташ ĕлĕкхи патша вăхăтĕнчи пусмăрлăха чăтса курнă, скер, социалисăм строителствинче паттăрла ĕçлесе Аслă Совета суйланма мăнĕ тивĕçлĕхе çухатмĕ. Ăна Патăрйел, Йелчĕк, Шăнкăртам районĕсенчи ĕçхресченĕсем тивĕçлĕ хак параççĕ, унăн йал хушшинче ту[illegible] пысăк ĕçĕсене хисеплеççĕ. Харитонова йулташа Аслă Совета суйлама палăртнине пĕлсенех, ун патне красноармейецсем, учителсем, ытти йалсенчи колхозниксем саламласа çырусем йанă.

Халхи вăхăтра кашни йалтах ун çинчен хĕрӳлĕ калаçу пырать. Уйрăм колхозниксем, бригадирсем, йалсоветра ĕçлекенсем ăна тивĕçлипе хак параççĕ. Йенкассинчи „Буденный" колхоз бригадирĕ Гурйанов йулташ Харитонова йулташ çинчен çапла калать:

— Пирĕн Йенкассинче Харитонова йулташ кулаксемпе лупсене пĕтерсе колхоз тума пулăшрĕ. Ĕлĕк чăваш хĕрарăмĕ турчкапа мелке тытса кăмака умĕнче çеç тăнĕ пулсан, халхи Сталин саманинче хĕрарăм çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре герой пулса тăчĕ. Çавăн пек геройсенчен пĕри Олга Тихоновна. Çавăнпа та пирĕн колхозниксем ăна Аслă Совета суйлама пĕр харăс сасăлаççĕ.

— Харитонова йулташ мĕн револуциренпех клас кĕрешĕвĕнче, културфронтĕнче паттăрăн ĕçлесе пиçнĕ çын. Вăл Ленинпа Сталин парти çулĕнчен пĕр пăрăнмасăр ĕçлекен болшевик,—тесе хак парать ăна Патăрйел йалсовет председателĕ Шатиреков йулташ.

Патша саманинче йăвăр асаплă хĕн хурпа кĕрешсе курнă. Совет власĕ пулсан ĕçпе маттура тухнă чăваш ĕçхалăх хĕрне—О. Т. Харитонова йулташа Аслă Совета суйлама кандидата тăратни вăл чăваш хĕрарăмĕсемшĕн те пысăк савăнăç. Çак савăнăça Ленинпа Сталин партийĕ, унăн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ панă. Çавăнпа та чăваш ĕçхалăхĕ коммунисçен партине, Сталин йулташа чĕререн йуратса ĕçлекен чи маттур та паттăр ывăл-хĕрĕсене Аслă Совета суйлать.

Ф. Çитта.

Суйлав умĕнхи канашлусем

Епĕр Чкалов, Розанов, Краснов йулташсемшĕн сасăлатпăр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче суйлав умĕнхи канашлу пулчĕ. Йалсенчен килнĕ представителсем 300 çын ытла пуçтарăнчĕç.

Канашлăва „Правда“ колхоз представителĕ Котепкин Йефим уçрĕ.

Президиум суйланă хыççăн Буденный йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Моисейев йулташ сăмах илчĕ.

Вăл хайсен колхозĕнчи суйлавçăсем ССР Союзĕн Аслă Советне çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене суйлама—Розанов, Краснов; Чкалов йулташсемшĕн сасăсем пама хатĕр тăни çинчен каларĕ.

Ун хыççăн „Сталь“ колхозран Илларионов, Сурăм колхозĕнчен Матйанин йулташсем сăмах илеççĕ.

„Хĕрлĕ çалтăр“ колхозри 58 çула çитнĕ старик сăмах тухса каларĕ:

— Манăн ĕлĕкхипе халăхи çинчен калас килет,—тесе пуçласа йарать вăл хайĕн сăмахне. Унтан хăй тӳсе курнă ĕлĕкхи йавăр пурнăç çинчен тата халăхи пурнăç çинчен каласа кăтартать.

— Çакă ырă пурнăçа Сталин йулташ йертсе пынипе турăмăр. Епĕр Сталин йертсе пынипе пуйан пуранакансем пулса тăтăмăр. Колхозра савăнса ĕçлетпĕр. Кăçал епе хам, 58 çулхи старик пулсан та, 166 ĕçкунĕ турăм. Çемйипе 560 ĕçкунĕ. Тата телейлĕрех те чаплărах пурнăç пултăр тесе хамăн сассăма Розанов, Чкалов, Краснов йулташсемшĕн паратăп. Ыттисене те чĕнетĕп.

Сидоров хыççăн „Будь готов“ колхозран Металлов йулташ сăмах тухса каларĕ.

Суйлав умĕнхи задачăсем çинчен Йетĕрне суйлав округ председателĕ Осипов йулташ каласа пачĕ.

— Тухса калаçмасăр чатма пултараймарăм,—тет Чапайев йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Баранов йулташ,—меншĕн тесен ĕлĕкхипе халăхипе аса илсен калаçасах килет. Ĕлекхи вăхăтра пирĕн пек çынсем влаçра пулма пултарайман. Октабер революци пулнă хыççăн анчах хамăр хушаран Аслă Совета депутатсем суйлатпăр.

Баранов хыççăн Националсен Советне суйлама Йетĕрне суйлав округĕ тăрăх кандидата палартнă Алексей Михайлович Розанов йулташ сăмах илчĕ.

— Йулташсем, нумай калас килет, анчах калама йывăр. Меншĕн тесен манăн чĕре сире тав тума ли пысăк савăнăçпа тулчĕ. Сире, мана Аслă Совета суйлама кандидата тăратнăшăн, пысăк шанăç хунăшăн чĕререн тав тăватăп,—тесе пуçласа йаче вăл. Унтан малашне те класа ташман сĕмпе хайаррăн кĕрешсе пыма, йаланах савăнăçла пурнăçшăн, Ленин-Сталин парти ĕçĕшĕн хастарлă ĕçлесе пыма пулни çинчен калать.

Пирĕн чечекленекен Совет Союзĕпе Чăваш республикинчи çитĕнӳсем çинчен аса илчĕ.

— Епе çирĕп те савăнăçлă. Меншĕн тесен, тĕлĕнтерекен совет халăхĕ хайĕн ташманне пĕлет, совет халăхĕ меншĕн тата кампа çапăçмалине лайăх пĕлет, совет халăхĕ ССР Союзĕн Аслă Советне камсене суйламалине те пĕлет,—тесе вĕçлет вăл хайĕн сăмахне.

Розанов йулташ хыççăн Союз Советне суйлама Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх кандидата палартнă Андрей Михайлович Краснов йулташ сăмах илчĕ.

— Йулташсем! Есĕр мана Аслă Совета суйлама кандидата тăратнăшăн сире пурне те чĕререн тав тăватăп. Пирĕн Совет Союзĕ 20 çул хушшинче Ленин—Сталин йертсе пынипе питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Малала Краснов йулташ Совет Союзĕ 20 çул хушшинче тунă çитĕнӳсем çинчен каларĕ.

— Епĕр, паян кунта пуçтарăннă çынсем, ĕлĕкхи вăхăтра пулсан, правителствăн çӳлти органне мар, йалти старастă суйланă çĕрте те пулма пултарайман. Ĕлĕк йалти старăста кулаксемпе карма çăварсем анчах суйлана. Пирĕн пек чухансемпе вăтамсене, батраксене, уйрăмăнах хĕрарăмсене суйлава хутшăнтарман. Ĕлĕкхи вăхăтра пулсан епĕ çакăн пек чаплă канашлусенче те пулас çукчĕ,—терĕ Краснов йулташ.

Малала вăл çак çирĕм çул хушшинче хăй мĕнле çитĕнсе пыни çинчен, хăй йертсе пыракан „Крестьянская газета“ йачепе тăракан колхоз мĕнле ӳссе, тĕрекленсе пыни çинчен каласа кăтартрĕ. Хăшпĕр вырăнсенче суйлава тивĕçлипе хатĕрленменни çинчен асăрхаттарчĕ. Теслехшĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ишеккасси суйлав участкине илчĕ. Унта суйлава пите начар хатĕрленнине, унти çитменлĕхсем çинчен тата вĕсене мĕнле майсемпе пĕтермели çинчен каласа пачĕ. Йулашкинчен вăл:

— Халăх хунă шанăçа пурнăçласси шĕн хамăн мĕн пур вăйа, пурнăça, кирле пулсан, пĕр тумлам йун йулмиччен ташмансемпе çапăçса пуçа хума хатĕр тăни çинчен, сире, суйлавçă йулташсем, шантаратăп,—терĕ.

Краснов йулташ хыççăн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи коммунисла органзацинчен Толстов йулташ сăмах тухса каларĕ.

Канашлу Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăнчĕ. Резолюци йышăннă хыççăн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пур суйлавçăсем патне те чĕнсе каланине çирĕплетрĕ. Суйлав участкисене пулăшса пыма 39 доверенăй суйларĕç. Канашлу каçхине, 9 сехетре хупăнчĕ.

Канашлу хыççăн клуба „Абрек Заур“ кино-картинă кăтартрĕç.

П. Сатур,
Н. Иванов.

А. Ф. Горкин йулташ Тăвай районĕнчи суйлавçăсем патĕнче

Нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Канаш суйлав округĕ тăрăх Националсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Ф. Горкин йулташ пулчĕ.

Соцкултурă çурчĕ патĕнче пысăк митинг пулчĕ. Митингра Горкин тата Цыганова йулташсем сăмах каларĕç. „Красная Чувашия“ колхозри Васильев колхозник колхозниксен йачĕпе сăмах каларĕ. Районри учителсен йачĕпе Тимофеева йулташ сăмах каларĕ. Вĕсем депутата суйлама палартнă кандидатсене—Горкин, Чкалов, Цыганова тата Г. И. Иванов йулташсене саламларĕç.

Митинг хыççăн суйлав умĕнхи районри канашлу пуçланчĕ. Соцкултура çурчĕ лăках халăхпа тулчĕ. Пĕтемпе 650 çын ытла. Парти райком секретарĕ Васильев йулташ канашлăва уçнă хыççăн Канаш суйлав округĕн суйлав комиссии председателĕн заместителĕ Сорокин йулташ ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ йулташсем çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн Горкин йулташ суйлавçăсене саламласа сăмах калама тытăнчĕ. Пĕтĕм зал пер чарăнмасăр чылайччен ала çупса тăрать. Сывă пултăр Сталин йулташ! Сывă пултăр Совет правителстви! кĕрлет залри халăх.

— Есĕр мана Аслă Совета суйлама кандидата тăратрăр, тет Горкин йулташ, ман çине пысăк шанчăк хутăр. Есĕр мана пысăк шанчăк панине малашнехи хаман ĕçсенче кăтартăп. Епĕ ку таранчен хамăн ĕçсенче Ленин—Сталин парти ĕçĕсемшĕн пĕтĕм вăйхала хурса кĕрешнĕ, малашне те Ленин—Сталин парти ĕçĕсемшĕн, коммунисăмшăн, халăх ташманĕсемпе хайаррăн кĕрешсе пыма сăмах паратăп. Унтан Горкин йулташ хайĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тата пирĕн Аслă Совет çĕршывĕн пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен тĕплĕн, ăнланмала лайăх каласа пачĕ. Вăл каланă чухне залăра темиçе хут алă çупса ура çине тăрса хавасланаççĕ. Епĕ,—тет малала Горкин йулташ,—1897 çулта вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Çапла ĕнтĕ 40 çул—Октябер революциччен 20 çул, Аслă революци хыççăн 20 çул пуранатăп. Çамрăк чух çемйене усрасшăн хуласем тăрăх сахал мар ĕçлесе çӳренĕ. Атте килте ала пушмак çĕлесе пуранннă тата коновал пулнă. Революцилĕ ĕçсене епĕ 1914 çулсенче хутшаннă. 1916 çулта партине кĕнĕ. Мана парти вĕрентсе пăхса ӳстерне. Епĕ йаланах партипе халăх интересĕсемшĕн тăнă. Малашне те ĕçхалăх интересĕшĕн, колхозри пуйан та културалă пурнăçшăн пĕтĕм вăйран тăрашса ĕçлеме сăмах паратăп.

Сывă пултăр аслă Совет çĕршывĕ! Сывă пултăр пирĕн йуратнă Аслă Сталин! Сывă пултăр Совет правителстви! Пурте „урра“ кăшкăраççĕ.

Малала Цыганова йулташ суйлавçăсене саламласа хайĕн ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа пачĕ. Унтан Сталинла Конституцишĕн пĕтем вăйа хурса ĕçлеме, кĕрешме сăмах парать. Канашлура мĕн пуре 6 çын тухса каларĕç. Декаберĕн 12 мĕшĕнче пурте пер сасăпа Горкин, Чкалов, Цыганова тата Г. И. Иванов йулташсемшĕн сасăлама пулчĕç.

Каховский.

Китайри вăрçă.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай боецĕсем артиллери орудийĕ патĕнче (Путупа районĕ). (Союзфото).

Китайри вăрçă

Нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче, çанталăк йусаннă хыççăн, пĕтĕм Шанхай фронтĕнче — Цзйан-инь хулинчен (Йанцзы шывĕ хĕрринче) пуçласа Хайчжоу заливĕ таранах, каллех хайар çапăçусем пуçланса кайнă.

Цзйан-инь патне Йапонин çар карапĕсем хĕрехе йахăн пухăннă. Çав районра иккĕмĕш кун ĕнтĕ артиллери вăйлă персе тăрать. Китайăн артиллерийĕ Йапонин çар карапĕсене Йанцзы шывĕ тăрăх çӳлелле, Нанкин патнелле кайма памасть.

Шанхай—Нанкин чукун çулĕ çăрахĕнче Китай çарĕсем контрнаступлени тума пуçланă. Вĕсем халĕ Уси станцинчен хĕвелтухăç йенче—20 километрта.

Нанкинран кантăр-хĕвелтухăç йенче—Сучжоу хули урамĕсенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Çурçĕр Китайри фронтсенче çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Китай отрйачĕсем Шанси тата Хебей провинцисен нумай районĕсенче, час-часах Йапони çарĕсен тылĕнче çапăçаççĕ. Нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче, Госйан хули сывăхĕнче (Шанси провинци) партизансен отрйачĕ йапонцăсен апат-çимĕç тата хĕçпăшал обозĕ çине тапăннă. Обозне пĕтĕмпех пĕтерне. Çапăçу вăхăтĕнче йапонцăсен 50 салтак вилнĕ. Çав провинцирех Китай çарĕсем йапонцăсенчен пысăк хула—Йуаньпин хулине туртса илнĕ.

Йапони çарĕсем Китай хулисене туртса илнĕ чухне халăха хайаррăн тапăнаççĕ. Машань тата Изйашинь хулисенче (Шанси тата Хебей провинцисен чиккинче) Йапони çарĕсем мирлĕ пурăнакансене 1.300 çын вĕлернĕ. (ТАСС).

Брюссельри конференци

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Брюссельре (Бельги) тăхăр державă килĕшӳне алă пуснă государства представителĕсен конференцийĕ хупăннă. Конференци ĕçĕн ăнăçлăхĕ пит сахал пулнă. Конференци малала ĕçлеме пухăвассине „паллă мар срука“ хăварнă.

Çак конференцийĕ Лигă наци решенийĕ тăрăх, Инçет-Хевелтухаçĕнче мирлĕ самана пултăр текен пысăк державăсем пуçарнипе, пухнă. Конференцие чĕннĕ: ССР Союзне, тăхăр державă тунă килĕшӳве хутшăннă çĕршывсене тата Германийĕ. Йапони хыççăн кайса, Германи конференцине представител йаман. Игали делегачĕ конференцире тăтăшах Йапони Китайа вăрçăпа тапăнни хутне кĕрсе каланă, вăл конференци ĕçне пĕчĕке хума тăрăшнă.

Конференци, пит асăрханулă сăмахсемпе, Йапони Китайа вăрçăпа тапăннине сивленĕ. Анчах Йапони Китайа хирĕç çаратулă вăрçă вăрçнине чарса хума нимĕн те туман. Китай делегачĕ Веллингтон Ку Йапонийĕ економикă тĕлĕшпе хĕсме ыйтнă. Анчах Китай представителĕн çавăн пек ыйтăвĕ пирки конференци нимĕн те шарламан. Конференци уçăличчен нумай малтан Англи правителстви çапла пелтернĕ:—Англи çак конференцийĕ Йапонипе Китай хушшинче посредник пулас тĕллевпе, пырать, тенĕ. Ытти державăсем те Йапони империалисăмне йĕвенлеме тата Китайа пулăшма тăрăшнине палăртман. ССР Союзĕ çеç, хăйĕн мирлĕ политикине тытса пырса, конференцире хăй йенчен сĕнӳ панă Вăрçăпа тапăнакан Йапонийе хирĕç мирлĕ çĕршывсен пĕтĕмĕшлĕ фронтне тăвас пулать, тенĕ ССР Союзĕн представителĕ конференцире.

Çав вăхăтрах, конференцийе хутшăннă çĕршывсем Йапони вăрçăпа тапаннине чарса хума пултарнă. Йапони економикă тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене, Английе тата ытти çĕршывсене те хытă пăхăнса тăрать. Çак çĕршывсем Йапонийе економикă тĕлĕшпе хĕссессĕн, вара Йапони захватчикĕсем çуначĕсене самайах усна пулеччĕç. Конференцийе хутшăннă çĕршывсем Китай халăхне пулăшасах тенĕ пулсан, Китайа тӳррĕнех те пулăшнă пулĕччĕç. Анчах конференци çавсене туман. Конференци Китайа хӳтлес тесе çирĕппĕн тăман, çавна Йапони, тĕрĕсех те пулать ĕнтĕ вăл, хăйĕн хăшпĕр çĕнтерĕвĕ пулать, тесе шутлать. Халĕ Йапони империалисĕсем Китайа вăрçăпа тапăнассине сарса пыраççĕ. Вĕсем çĕнĕ фронтра—Кăнтăр Китайра вăрçă пуçарса йама хăтланаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех конференцире Иевропăри державăсем тата Америка Йапонийе Азире хуçаланса тăма пама шухăшламанни курăннă. Конференцийе пухни хăйех те вăрçăпа тапăнакана морал тĕлĕшпе çапни пулса тăрать. Çак конференцийе пухни—мире сыхлакансен фрончĕ пурăннине тата вăл миршĕн кĕрешнине кăтартса тăрать.

Хаçатсене пăхса тухни

Тĕп ĕç—Аслă Совет суйлавне хатĕрленесси

Орининри „Хĕрлĕ Сормово“ колхозра (Тутаркас р.) виççĕмĕш çул ĕнтĕ „Ударник“ йатлă хаçат пичетленсе тухса тăрать. Хаçатăн тиражĕ 140 екçемпляр. Кунашкал хаçатсем пирĕн республикăра иккĕ анчах (тепри Кольцовкăри колхозра).

Анчах çак хаçат нумай чухне колхозниксене кăмăла каймасть. Акă октяберпе нойабĕр уйăхĕсенче тухнă номĕрсенче хаçат ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленесси çинчен пачах çырмасть. „Ударник“ хаçат ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун çинчен, Суйлав комиççисене çирĕплетесси (28, 29 мĕш номĕрсенче) çинчен йышăннă правителствă постановленисене пичетлесе кăларнипех лăпланнă.

Орининă—суйлав участки центăрĕ. Унта суйлав комиççи ĕçлет, доверенăйсем ĕçлеççĕ. Анчах çак комиççи мĕнле ĕçлет, суйлавçăсен спискине мĕнле тунă, суйлавçăсем панă жалăбасене мĕнле пăхса тухать, суйлав пулмали çурта мĕнле хатĕрленĕ, суйлавçăсем хушшинче мĕнле ĕçлеççĕ, доверенăйсем мĕн тăваççĕ. Çаксем çинчен хаçатан суйлавçăсене номертен-номĕрте çырса пĕлтермеле. Суйлава хатĕрленес ĕçри пур çитменлĕхсене те сивеччен критиклемеле. „Ударник“ хаçатра вĕсене пĕрне те курайман.

. Орининрах комсомол организаци пур. Комсомол организаци суйлав участкинче мĕн тăвать? Суйлава пуçласа хутшăнакан 18 çулхи çамрăк суйлавçăсене кăтартас мар-и? Çакăн пекех хĕрарăмсемпе çамрăк хĕрачасем хушшинчи ĕçе манма кирле-и вара?

Хаçатра çутатмали темăсем нумай. Тене хирĕç кĕрешес ĕç çинчен, уйрăм колхозник çемйисем суйлава хатĕрленнисем çинчен хаçатра тĕплĕн çутатмала. „Ударник“ хаçат Оринина хăш суйлав округне кĕни çинчен, çак округра ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама камсене кандидата палăртни çинчен те суйлавçăсене çырса пĕлтермен.

Парти Тĕпкомĕн членĕ, парти пропагандипе агитаци пайĕн заведуйушчийĕ Алексей Иванович Стецкий йулташ ССР Союзен Аслă Совечĕн Националсен Советне суйламали Шупашкар суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшсе, „Хĕрлĕ Сормово“ колхоз колхозникĕсем патне телеграммă йанă. Хаçатăн çак документа нимĕн кĕтсе тăмасăрах пичетлесе кăлармала, тата республикăри хаçатсене пĕлтермеле пулнă. Анчах хаçат Стецкий йулташ телеграммине те пичетлесе кăларман, республикри хаçатсене те паман. Пĕр çак факт кăна хаçат ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне активлăн хутшăнассине ăнланманни çинчен калать.

Колхозсенчи хаçатсем-стена хаçачĕсем те, пичетленсе тухаканнисем те, большевикла пичетĕн кĕçĕн отрйачĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсен—ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавне халăха хатĕрлес ĕçре партине пулăшмала. Хаçатсемпе йалкорсен ташмансене пĕр ыванмасăр тăра шыв çине кăлармала. Анчах „Ударник“ хаçат халĕ большевикла пичетĕн принципла çулĕпе çинче мар. Вăл хайĕн умĕнче тăракан задачăна пурнăçа кĕртеймест. Ку вăл хаçат суйлавçăсен массинчен уйăрăлса кайнинчен, йалкорсен активĕн çĕне кадарне—колхозри стахановецсемпе ударниксене вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлеменнинчен килет. Çакна хаçат çине çырса тăракансем 4—5 çын çеç пулни, колхозник-стахановецсемпе ударниксене хаçатра вырăн памании лайăх кăтартса парать.

Халĕ суйлав кампанийĕ хĕрсе пырать. Çине тăрса тытăнсан „Ударник“ хаçат ку таранччен тунă йанăшсенчен чылайăшне тӳрлетме пултарать. Халăхи вăхăтра унан умĕнче ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсемшĕн, декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлавçăсене 100 процентĕпех суйлава хутшăнтарассишĕн большевикла агитаци сарас задачă тăрать. Хаçатăн халĕ большевикла агитаци ĕçне сарса, Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсене, вĕсем пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн шанчăкла ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулнине суйлавçăсене тĕплен каласа памала. Хаçатăн хайĕн пĕтĕм ĕçне суйлава лайăх иртерес ĕçе пăхăнтармала.

Сталин йулташ докладне итлерĕç

ИШЛЕЙ. Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйезĕнче Сталин йулташ Конституци пройекчĕ çинчен исторйлĕ доклад тунăранпа кăçалхи нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче çулталăк çитрĕ. Ишлей районĕнчи Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхоз тата Тивĕшри „Тивĕш“ колхоз членĕсем нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче пĕрле пухăнса, Сталин йулташ докладне, граммофон пластинкисем çине çырнине, патефонпа итлерĕç.

Н. Йершов.

Ыйтусемпе ответсен вечĕрĕ

Нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче Вăрман-Сӳктер йалĕнчи (Ишлей районĕ.) çамрăк активиссем, „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положени“ тăрăх ăнланмасăр йулнă ыйтусене сӳтсе-йавма вечер туса иртерчĕç. Вĕсем пĕр пĕрине ыйтусем парса, суйлав саккунне çепĕр хут тĕплĕн вĕренчĕç. Ун хыççăн „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине“ лайăх пĕлекен 16 çамрăка кашнине 4 кил çирĕплетсе пачĕç. Вĕсем хушшинче каçал Хĕрлĕ çарган таврăннă 3 красноармейец

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕн“ 272-мĕш №-че „Зойа Ананйевна Андрейева“ йатлă статйара йăнăшсем кайнă.

5-мĕш колонкăра çӳлтен 6-мĕш йĕркере Çĕпрел йалĕнче (Çĕрпӳ р.) тейес вырăнне (Йетĕрне уйесĕ) тесе вуламала.

7 мĕш колонкăра çӳлтен 12-мĕш йĕркере абзац пуçламĕшĕнче 1926-ш çул вырăнне 1927-мĕш çул тесе вуламала.

8-мĕш колонкăра çӳлтен 4-мĕш йĕркере 600 тоннă тесе çырнине 60 тоннă тесе вуламала.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Националсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Националсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕн адресĕ çапла:

Шупашкар хули, Чувашскайа урам, 6-мĕш № çурт (Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çурчĕ).

ТЕЛЕФОНСЕМ:

Председателĕн—6—59, 5—31 тата 5—24.
Секретарĕн—5—24 тата 0—02.
Ответлă исполнителсен—0—66 тата 0—55.

Государствă Банкĕн Чăваш Республикинчи кантурне çакнашкал работниксем

КИРЛĔ:

Кивçенлĕх инспекторĕсем—3
Ревизор—1
Аслă бухгалтерсем—2
Бухгалтер—1
Машинисткăсем—2

Ĕçукçи Государствă нормированийĕ тăрăх.

Кадрсемпе ĕçлекен Й. Ивановран ыйтса пĕлмеле.
2—2

Чăвашсен государствă педагогикă институтĕнче заочнă вĕренекен студентсене 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче çеççисене пухмали

ПЛАН

Декабĕрĕн 14—21-мĕшĕсенче кивĕ наборти историксен 1-мĕш курсĕ пухăнать—80 çын.
Декабĕрĕн 21—30-мĕшĕсенче кивĕ наборти математиксен 1-мĕш курсĕ пухăнать—80 çын.

Асăрхаттарни: Кивĕ наборти 1-мĕш курссенчи заочниксене консултаци пама тата малали курссене куçармали екзаменсем йышăнма çеç пухаççĕ. Кивĕ наборти 1-мĕш курссенчи заочниксен малашне çеççисем пулмаççĕ тата 2-мĕш курса куçайман заочниксене институтран кăларса пăрахаççĕ.

Институт дирекцийĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ.

2—2

Шупашкар хулинчи ĕççыннисене асра тытма

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ГОРТОП

(Хутмали вут-шанкă хатĕрлекен организаци)

кăçалхи сезонра хутма Шупашкар хулинчи мĕн пур ĕççыннисенчен

вутă хатĕрлеме заказ йышăнать

Заказ йышăннă чухне расчота Гортоп кантурĕнче тăваççĕ. (Максим Горький урамĕ, 23-мĕш номĕрлĕ çурт).

Вут-шанкине çуна çулĕ пулсан Атăл хĕрринчи складран параççĕ. Çуна çулĕ пулаччен Гортопăн Атăл хĕрринче пăрахăç йăвăççем сутлăх пур, вĕсем çунтарма та, карта-хура тытма та йурăхлă.
3—2

Районсенчи Çутĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата туллимар вăтам шкулсемпе вăтам шкулсен директорĕсене

ПУРНЕ ТЕ

Чăвашсен государствă педагогикă институтĕнче заочнă вĕренекен студентсене çеççисене пухмали Çутĕç Халăх Комиссарĕ çирĕплетнĕ план тăрăх, Чăваш АССР Çутĕç Халăх комиссариачĕн Шкул управленийĕ районсенчи çутĕç пайĕсен пуçлăхĕсене тата шкул директорĕсене заочниксене çав çеççисене 100 процентĕпех йама хушать. Заочниксене çав çеççисене тухса килме чарса тăракан сăлтавсем пулмала мар. Заочниксем çеççисене килессишĕн районри çутĕç пайĕн пуçлăхĕ тата учител-заочник ĕçлекен шкул директорĕ ответлă пулаççĕ.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Шкул управленин начальникĕ ТРОФИМОВ.

2—2

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 906. Гор. Чебоксары, Типография № 2 Чуваш полиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13264. Б6—82 см. Б—3 п. л.